Чувашская Республиканская библиотека им. М. Горького №

ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

1953 çул
Август 28
эрнекун
№ 168 (9077)
36-мӗш çул тухать.
Хакӗ 20 пус.

Паянхи номерте:

РСФСР Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш сессийӗ (1 стр.).

РСФСР Верховнӑй Совечӗн 1953 çулхи августӑн 26-мӗшӗнче пулнӑ ирхи тата каçхи ларӑвӗсем çинчен информациллӗ пӗлтерӳсем (1 стр.).

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗ çинчен тата РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен РСФСР Финанс министрӗ **И. И. Фадеев** депутат тунӑ доклад (2—3 стр.).

Малта пыракан колхозсенчен пример илсе, пур колхозсем те çак кунсенчех государствӑна тырӑ парса татмалла тӑвассишӗн кӗрешер! (3 стр.).

Совет Правительствипе Демократиллӗ Германи Республикин Правительство делегацийӗ хушшинче пулнӑ калаçусен итогӗсем çинчен урӑх çӗршывсенче мӗн çыраççӗ (4 стр.).

Демократиллӗ Германи Республикин Халӑх палати пӗлтерни (4 стр.).

Россия Федерацийӗн Государство бюджечӗ

Августӑн 26-мӗшӗнче Мускавра, Кремльти Пысӑк Дворецра, Россия Советлӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш сессийӗ уçӑлнӑ. Сесси кун йӗркине йышӑннӑ хыççӑн, РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗ çинчен тата РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи бюджетне пурнӑçлани çинчен доклад итленӗ. Сесси Бюджет комиссийӗн содокладне те итленӗ.

Союзлӑ республикӑсен бюджечӗсем, ССР Союзӗн Государство бюджечӗн пайӗсем пулса, Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин политикине палӑртса тӑраççӗ. Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин политики социализмла халӑх хуçалӑхне пӗрмаях аталантарса, вӑйлатса пырассине, ӗççыннисен материальнӑй пурнӑçӗпе культурӑлла шайне ӳстерессине тӗп вырӑна хурать. Совет Союзӗнчи халӑхсем пурте, партипе правительство тавра тачӑ пӗтӗçсе, коммунизм строительствинче, хамӑрӑн юратнӑ Тӑван çӗршывӑн хӑватне тӗреклетес ӗçре çӗнӗ çитӗнӳсем тӑвассишӗн тӑрӑшаççӗ.

СССР Верховнӑй Совечӗн нумай пулмасть пулса иртнӗ пиллӗкмӗш сессийӗнче промышленноçпа ялхуçалӑхӗ енӗпе тата халӑхӑн материальнӑй пурнӑçне лайӑхлатас тӗлӗшпе умра тӑракан задачӑсене татӑклӑн кӑтартса панӑ. Çав задачӑсемпе ӗçсене пурнӑçлама ССР Союзӗн 1953 çулхи бюджетӗнчен те, çавӑн пекех союзлӑ республикӑсен бюджечӗсенчен те укçа-тенкӗ парса тӑма палӑртса хунӑ.

Совет Союзӗнчи ӗççыннисем, мирлӗ строительствӑри аслӑ задачӑсемпе хавхаланса, пиллӗкмӗш пилӗк çулӑх плана тултарассишӗн тата ирттерсе тултарассишӗн социализмла ӑмӑртӑва анлӑрах сарса пыраççӗ. Çӗршывра массӑсен творчествӑллӑ пуçарулӑхӗ куллен-кун ытларах палӑрать, рабочисен, колхоз хресченӗсен, интеллигенцин ӗçри хастарлӑхӗ ӳссе пырать. ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ, вӗсен морллӗ-политикӑлла пӗрлӗхӗ тӗреклензе пырать. РСФСР-ти халӑхсем те, Совет Союзӗнчи тӑванла халӑхсемпе пӗрле, социализмла экономикӑпа культурӑна çӗнӗрен çӗклентерессишӗн, хамӑрӑн тӗп задачӑна—ӗççыннисен материальнӑй пурнӑçне малалла лайӑхлатас задачӑна — пурнӑçлассишӗн вӑйя шеллемесӗр кӗрешеççӗ.

Россия Федерацийӗ—пӗртан союзлӑ республикӑсен ретӗнче пӗррӗмӗш вырӑнта. Вӑл Совет Союзӗн пӗтӗм территорийӗн тӑватӑ пайӗнчен виçӗ пайне йышӑнса тӑрать. Совет Союзӗнчи пӗтӗм халӑх йышӗн çурри ытла РСФСР-та пурӑнать. Россия Федерацийӗн анлӑ çӗрӗ çинче пирӗн йывӑр промышленноçӑн питӗ пысӑк центрӗсем, çӑмӑл промышленноçпа апат-çимӗç промышленноçӗн пысӑк предприятийӗсем вырнаçнӑ. Хамӑр çӗршывра акса тӑвакан пӗтӗм тӗштырӑн виçӗ пайӗнчен икӗ пайне РСФСР-ти çӗрсем çинче акса тӑваççӗ. РСФСР-та республикӑна тата вырӑнти органсене пӑхӑнса тӑракан промышленность аталаннӑ, унта шкулсем, наука, санитари, сыватакан тата культурӑпа çутӗç учрежденийӗсем нумай.

РСФСР-ӑн 1953 çулхи государство бюджетне республикӑн производительнӑй вӑйӗсене малалла аталантарассине, ӗççыннисен пурнӑçне лайӑхлатассине асра тытса тунӑ. Кӑçал промышленноçа, ялхуçалӑхне, хуçалӑхӑн ытти отраслӗсем валли, социально-культурӑлла ӗçсем валли 51,9 миллиард тенкӗ уйӑрса панӑ, ку вӑл республика бюджетӗнчи пӗтӗм укçа-тенкӗн вунӑ пайӗнчен тӑхӑр пайӗ ытла пулать.

Республикӑн халӑх хуçалӑхне вӑйлатма укçа-тенкӗ уйӑрса пани кӑçал, иртнӗ çулхипе танлаштарсан, 2 миллиард тенкӗ ытла нумайрах, пӗтӗмпе 19 миллиард тенкӗ ытла пулать. Çак укçа-тенкӗ республикӑри тата вырӑнти органсене пӑхӑнса тӑракан промышленноçа, ялхуçалӑхне, пурӑнмалли çурт-йӗр тата коммунальнӑй хуçалӑха, транспорта малалла аталантарма май парать. РСФСР-ӑн республикӑри, вырӑнти тата коопераци промышленноçӗ халӑха валли тавар туса кӑларас ӗçре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Республикӑри промышленноçа, çавӑн пекех ялхуçалӑхне аталантарма укçа-тенкӗ ытларах уйӑрса пани партипе правительство кӑларса тӑратнӑ задачӑна—халӑха валли кирлӗ япаласем туса кӑларассине нумай ӳстерес задачӑна пурнӑçлама май парать.

РСФСР хуçалӑхӗн пур отраслӗсенче те капитальнӑй ӗçсен анлӑ программине пурнӑçласа пыраççӗ. Ку ӗçсене тума кӑçал 7,8 миллиард тенкӗ каять. Çӗнӗ фабрикӑсем, заводсем, коммунальнӑй предприятисем тунипе пӗрлех пурӑнмалли çуртсем, шкулсем, сывлӑха сыхлакан учрежденисем, ача сачӗсемпе яслисем, кинотеатрсем тата ытти культурӑпа йӑла учрежденийӗсем нумай тума палӑртнӑ. Кӑçалхи пӗррӗмӗш çур çулта РСФСР министерствисемпе вырӑнти Советсем пурӑнмалли çуртсем тума укçа-тенкӗ уйӑрса пани, иртнӗ çулхи çав вӑхӑтрипе танлаштарсан, 22 процент ӳснӗ.

Республикӑн Государство бюджетӗнчи укçа-тенкӗн пысӑк пайӗ—41 миллиард тенке яхӑн—социально-культурӑлла ӗçсем валли каять. Халӑха вӗрентме, сывлӑха сыхлама тата физкультура ӗçӗ валли, социальнӑй страхованипе социальнӑй обеспечени валли укçа-тенкӗ нумай уйӑрса пани Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви хамӑр çӗршыври ӗççыннисен пӗрмаях ӳссе пыракан материальнӑй тата культурӑлла ыйтӑвӗсене ытларах тивӗçтерессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшни çинчен татах тепӗр хут калать.

РСФСР-ти крайсен, облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсем çултан-çул ӳссе пыраççӗ. Вӑрçӑ умӗнхи вӑхӑтрипе танлаштарсан, кӑçал çав бюджетсен пысӑкӑшӗ икӗ хут ытла ӳснӗ. Крайсен, облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсен пилӗк пайӗнчен икӗ пайӗ районсен тата ялсен бюджечӗсем пулса тӑраççӗ, вӗсем ялти халӑхӑн ыйтӑвӗсене тивӗçтерес тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнаççӗ.

Социализмла хуçалӑхран пухӑнакан тупӑшсем пысӑккӑн ӳсни, çав вӑхӑтрах халӑхран укçа-тенкӗ пухассине чакарса пыни пӗтӗм Совет государствин тата кашни союзлӑ республикӑн бюджечӗсен паллӑ уйрӑмлӑхӗ пулса тӑрать. Паллӑ ӗнтӗ, пирӗн çӗршыври ӗççыннисем кӑçалхи çул хӑйсен укçипе налогсемпе сборсем тӳлесе тата заем çыранса илсе СССР Государство бюджетне паракан тупӑш, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, 21 миллиард тенкӗ сахалрах пулать. Халӑхран укçа сахалрах пухмалла туни РСФСР бюджетӗнче те палӑрса тӑрать. СССР Верховнӑй Совечӗ ялхуçалӑх налогӗ çинчен йышӑннӑ çӗнӗ Закон тӑрӑх кӑçал Россия Федерацийӗнче çак налог сумми, иртнӗ çулхипе танлаштарсан, 2 миллиард та 400 миллион тенкӗ е 44,6 процент чакать.

Хуçалӑхпа культурӑна аталантарас енӗпе çитӗнӳсем тунӑ пулин те, Россия Федерацийӗнчи государство тата хуçалӑх органӗсен ӗçӗнче çитменлӗхсем те сахал мар-ха. Республикӑра производство планӗсене, çавӑн пекех тата продукцин хӑйне ларакан хакне чакармалли заданисене пурнӑçламан предприятисем тата промышленность отраслӗсем те пур-ха. Республика промышленноçӗпе вырӑнти промышленноçӑн фабрикисемпе заводӗсем нумайӑшӗ япӑх продукци туса кӑлараççӗ. Республикӑри уйрӑм районсенче вырӑнти чӗртавартан таварсем туса кӑларасси çине кирлӗ пек çаврӑнса пӑхмаççӗ.

РСФСР Верховнӑй Совечӗн сессийӗнче палӑртнӑ çав çитменлӗхсене пӗтерес пулать. Республикӑри государство аппарачӗн, предприятисен тата хуçалӑх организацийӗсен ӗçне лайӑхлатмалла, шалти резервсене мобилизацилемелле, халӑх хуçалӑхӗн мӗнпур отраслӗсенче тирпейлӗх режимне çирӗппӗн пурнӑçласа пымалла.

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджетне ӑнӑçлӑ пурнӑçлани партипе правительство промышленноçа тата ялхуçалӑхне малалла аталантарма, совет халӑхӗн пурнӑçне малалла лайӑхлатма палӑртса хунӑ задачӑсене пурнӑçа кӗртме пулӑшӗ.

(«ПРАВДА» хаçатӑн 1953 çулхи августӑн 26-мӗшӗнчи умстатьи).

Шупашкар районӗнчи колхозсем государствӑна тырӑ памалли плана тултарнӑ

КУКЕÇ, августӑн 27-мӗшӗ. (Телеграфпа). Шупашкар районӗнчи колхозсем государствӑна тырӑ хатӗрлесе памалли плана августӑн 26-мӗшӗ тӗлне 100,5 процент тултарчӗç. Тырӑ хатӗрлесе парас ӗçе «Красный флот», «1-ое Мая», «Серп и молот», Кадыков ячӗпе, Хрущев ячӗпе, Крупская ячӗпе, Калинин ячӗпе, Каганович ячӗпе, Коминтерн ячӗпе, Буденный ячӗпе тӑракан колхозсем уйрӑмах лайӑх туса пычӗç. МТС ӗçлесе панӑшӑн натуроплата тӳлемелли счетсем тӑрӑх государствӑна тырӑ парас ӗç малалла пырать.

КПСС райкомӗн секретарӗ **М. ЗАЙЦЕВ.**
Райисполком председателӗ **А. СЕМЕНОВ.**
Ялхуçалӑхӗпе хатӗрлев управленийӗн начальникӗ **П. ЕФРЕМОВ.**
МТС директорӗ **П. СМИРНОВ.**

РСФСР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧӖН ЛАРӐВӖСЕМ

РСФСР Верховнӑй Совечӗн 1953 çулхи августӑн 26-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗсем çинчен ИНФОРМАЦИЛЛӖ ПӖЛТЕРӲ

Ирхи лару

Августӑн 26-мӗшӗнче, ирхине 11 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысӑк Дворецра, РСФСР Верховнӑй Совечӗн иккӗмӗш ларӑвӗ пулнӑ.

Лару председателӗ—РСФСР Верховнӑй Совечӗн Председателӗ **Л. Н. Соловьев** депутат.

Кун йӗркинче—РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗ çинчен тата РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен тунӑ доклада сӳтсе явасси.

Пренире çаксем тухса калаçнӑ: **А. П. Волков** депутат (Люберцы округӗ, Мускав облаçӗ), **И. С. Панькин** депутат (Михайловски округ, Сталинград облаçӗ), **Д. С. Полянский** депутат (Джанкой округӗ, Крым облаçӗ), **Н. Н. Коровецкая** депутат (Ливны округӗ, Орел облаçӗ), **Н. Е. Чесноков** юлташ (РСФСР Вырӑнти тата топливо промышленность министрӗ), **С. Н. Низамов** депутат (Бугульма округӗ, Тутар АССР-ӗ), **Г. А. Бездомов** депутат (Полтавски округ, Челябинск облаçӗ), **А. Т. Щепликов** депутат (Зубцов округӗ, Калинин облаçӗ), **В. С. Степанов** юлташ (РСФСР Сывлӑх министрӗ), **М. Н. Шунько** депутат (Кемеровски-Рудничнӑй округ, Кемерово облаçӗ), **К. В. Степанова** депутат (Ярославль ял округӗ, Ярославль облаçӗ), **Г. Ц. Цыдынжапов** депутат (Прибайкальски округ, Бурят-Монгол АССР-ӗ).

Çакӑнпа РСФСР Верховнӑй Совечӗн иккӗмӗш ларӑвӗ хупӑннӑ.

Каçхи лару

Августӑн 26-мӗшӗнче, каçхине 6 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысӑк Дворецра, РСФСР Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш ларӑвӗ пулнӑ.

Лару председателӗ—РСФСР Верховнӑй Совечӗн Председателӗ **Л. Н. Соловьев** депутат.

Ларура РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗ çинчен тата РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен тунӑ доклада малалла сӳтсе явнӑ.

Пренире çаксем тухса калаçнӑ: **Н. Д. Казьмин** депутат (Ломоносовски округ, Ленинград облаçӗ), **П. М. Хатанзейский** депутат (Архангельски-Приморски округ, Архангельск облаçӗ), **П. В. Сурин** депутат (Кировски округ, Куйбышев хули), **З. В. Миронова** депутат (Сущевски округ, Мускав хули), **Н. Г. Калин** депутат (Сокольски округ, Вологда облаçӗ), **И. А. Каиров** депутат (Похвистнево округӗ, Куйбышев облаçӗ), **М. М. Романова** депутат (Вӑрнар округӗ, Чӑваш АССР-ӗ), **С. К. Ламакин** депутат (Кашин округӗ, Калинин облаçӗ), **В. Я. Чуватов** депутат (Рузаевка округӗ, Мордва АССР-ӗ).

Çакӑнпа РСФСР Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш ларӑвӗ хупӑннӑ.

РСФСР Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш сессийӗ

Августӑн 25-мӗшӗнче Мускавра, Кремльти Пысӑк Дворецра, Россия Совет лӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш сессийӗ уçӑлнӑ.

Сесси хӑйӗн ӗçне совет халӑхӗн хастарлӑхӗ пысӑккӑн çӗкленнӗ вӑхӑтра тытӑннӑ. КПСС XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсемпе тата СССР Верховнӑй Совечӗн нумай пулмасть пулса иртнӗ пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсемпе хавхаланса, совет çыннисем социализмла Тӑван çӗршывӑн халӑх хуçалӑхӗпе культурин мӗнпур отраслӗсене малалла аталантармалли, ӗççыннисен материальнӑй пурнӑçне лайӑхлатмалли пысӑк программӑна ӑнӑçлӑн пурнӑçлаççӗ.

Совет Союзӗнчи тӑванла пӗртан республикӑсем хушшинче малта пыракан Россия Федерацийӗн мӗнпур кӗтесӗсенчен Мускава депутатсем—аслӑ вырӑс халӑхӗн тата Россия Федерацине кӗрекен ытти халӑхсен представителӗсем килсе çитрӗç.

Сессире хӑнасем—Мускаври предприятисенче ӗçлекен новаторсем, ученӑйсем, литературӑпа искусство деятелӗсем, Совет Çарӗн воинӗсем нумай.

Правительство ложисенче—РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн членӗсем министрсем. Ложӑсенче — посольствӑсемпе миссисӗн пуçлӑхӗсем, Совет Союзӗнчи тата урӑх çӗршывсенчи журналистсем.

Каçхине 7 сехет. Председатель сӗтелӗ хушшине РСФСР Верховнӑй Совет Председателӗ **Л. Н. Соловьев** депутат, РСФСР Верховнӑй Совет Председателӗн заместителӗсем **Н. М. Абдуллина, М. З. Азизов, А. С. Борисенко, А. А. Ильюшин, Н. А. Муравьева, И. В. Окунев, Е. И. Третьякова** депутатсем тухаççӗ.

Правительство ложисене **Г. М. Маленков, В. М. Молотов, Н. С. Хрущев, К. Е. Ворошилов, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, П. К. Пономаренко, М. А. Суслов, П. Н. Поспелов, Н. Н. Шаталин** юлташсем тухаççӗ. Вӗсене нумайччен тӑвӑллӑн алӑ çупса кӗтсе илеççӗ.

РСФСР Верховнӑй Совет Председателӗ **Л. Н. Соловьев** депутат РСФСР Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш сессийӗ уçӑлнӑ, тесе пӗлтерет. Вӑл доклад тума РСФСР Верховнӑй Совечӗн Мандат комиссийӗн Председательне **И. Т. Гришин** депутата сӑмах парать.

Гришин депутат РСФСР Верховнӑй Совечӗн иккӗмӗшпе виççӗмӗш сессийӗсем хушшинче пилӗк суйлав округӗнче тухса ӳкнӗ депутатсем вырӑнне çӗнӗрен депутатсем суйлани çинчен пӗлтерет.

Суйлавçӑсем пурте коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑланӑ.

В. Н. Пономарев депутат сӗннипе, Верховнӑй Совет суйланӑ депутатсен полномочийӗсем тӗрӗс пулни çинчен Мандат комиссийӗн докладне пӗр саслӑ пулса çирӗплетет.

Верховнӑй Совет çакӑн пек кун йӗрки йышӑнать:

1. Россия Советлӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикин 1953 çулхи Государство бюджечӗ тата РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен калакан отчета çирӗплетесси.
2. РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗсене çирӗплетесси.

Доклад тума РСФСР Финанс Министрне **И. И. Фадеев** депутата сӑмах параççӗ.

— Россия Совет лӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш сессийӗ,—тет вӑл,—пирӗн çӗршывӑн экономикипе культури çӗнӗрен пысӑк хӑватпа çӗкленсе пынӑ вӑхӑтра, Совет государствипе унӑн тӗнчери авторитечӗ тата ытларах тӗрекленнӗ вӑхӑтра пулса иртет. Советлӑ социализмла государство экономикӑпа культурӑна малалла вӑйлатмалли, ӗççыннисен материальнӑй пурнӑçне пӗрмаях лайӑхлатса пымалли аслӑ программӑна ӑнӑçлӑн пурнӑçлать.

РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен каласа, докладчик çакна палӑртать: Россия Федерацийӗнчи халӑхсем, мӗнпур тӑванла халӑхсемпе пӗрле, социализмла экономикӑна культурӑна аталантарас ӗçре пысӑк çитӗнӳсем турӗç.

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджетне çак сессире 57.552,2 миллион тенкӗ çирӗплетме тӑратнӑ. Иртнӗ çулхипе танлаштарсан, бюджет 3.292,4 миллион тенкӗ пысӑкрах пулать.

Республика бюджечӗн тупӑшӗсен тӗп пайӗ промышленноçран тата халӑх хуçалӑхӗн ытти отраслӗсенчи государство предприятийӗсемпе хуçалӑх организацийӗсенчен пухӑнакан укçа тата оборотран пухӑнакан налог укçи пулать. Халӑхран пухӑнакан укçа шучӗ, уйрӑммӑн илсен, ялхуçалӑх налогӗ чакнипе, чакса пырать.

Крайсен, облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсем вӑрçӑчченхипе танлаштарсан икӗ хут ытла ӳснӗ.

Предприятисен, организацисен тата учрежденисен финанспа хуçалӑх ӗçӗсем çинчен каласа, Фадеев депутат чылай министерствӑсене критиклет.

Докладчик çакна палӑртать: министерствӑсен, ведомствӑсен, вырӑнти Советсен исполнительнӑй комитечӗсен задачи тупӑшсем вӑхӑтра тата пӗтӗмпех пухӑнмалла тума тӑрӑшасси кӑна мар. Парти укçа-тенкӗне вырӑнлӑ, пӗлсе расходлама вӗрентет, укçа пӗр пус та усӑсӑр сая каймалла мар.

— РСФСР Государство бюджетне ӑнӑçлӑн пурнӑçлани,—тет юлашкинчен Фадеев депутат,—Коммунистсен партийӗпе Совет Союзӗн Правительстви халӑхӑн пурнӑç шайне малалла хӑпартас тӗлӗшпе промышленноçпа ялхуçалӑхне аталантарас тӗлӗшпе кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑçлама пулӑшать.

Нимӗн иккӗленмелли те çук, пирӗн çӗршыври рабочисем, хресченсем, интеллигенци çак задачӑсене чыслӑн пурнӑçлӗç, Партипе Правительство ертсе пынипе пирӗн социализмла Тӑван çӗршыври мӗнпур халӑхсен пурнӑçне малалла хӑвӑрт лайӑхлатса пырӗç!

Кун хыççӑн Бюджет комиссийӗн председателӗ **С. П. Афанасьев** депутат содоклад тӑвать.

Бюджет комиссийӗ республикӑн государство бюджетне 88,4 миллион тенкӗ ӳстерсе çирӗплетме сӗнӳ тӑратать. Çак укçа тупӑшсен шутне кӗмелле.

Бюджет комиссийӗн содоклачӗ хыççӑн РСФСР Верховнӑй Совечӗн пӗррӗмӗш ларӑвӗ хупӑнать.

(ТАСС).

* * *

Иккӗмӗш кун ӗнтӗ Кремльти Пысӑк Дворецра Россия Советлӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗн ларӑвӗсем пулса иртеççӗ. Августӑн 26-мӗшӗнче ирхи ларура РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджетне тата республикӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен тунӑ отчета сӳтсе явма тытӑннӑ.

Ирхине 11 сехет. Председатель сӗтелӗ хушшине РСФСР Верховнӑй Совечӗн Председателӗ **Л. Н. Соловьев** депутат, Председатель заместителӗсем **Н. М. Абдуллина, М. З. Азизов, А. С. Борисенко, А. А. Ильюшин, Н. А. Муравьева, И. В. Окунев, Е. И. Третьякова**, правительство ложисене—**К. Е. Ворошилов, П. К. Пономаренко, М. А. Суслов** юлташсем тухаççӗ. Депутатсемпе хӑнасем вӗсене нумайччен алӑ çупса кӗтсе илеççӗ.

Лару председателӗ ирхи лару уçӑлни çинчен пӗлтерет, **А. П. Волков** депутата (Мускав облаçӗ) сӑмах парать.

— Россия Советлӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикин бюджечӗ,—тет Волков юлташ,—Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви халӑх хуçалӑхне малалла аталантарассишӗн, ӗççыннисен материальнӑй пурнӑçне лайӑхлатассишӗн, культурӑллӑ шайне пӗрмай ӳстерессишӗн питех те хытӑ тӑрӑшнине уççӑн кӑтартса парать.

Вӑл малалла Мускав облаçӗнчи колхозсемпе совхозсенче пахча çимӗç туса илессине ӳстерес тӗлӗшпе тӑвакан ӗçсем çинчен калать. Çитес икӗ çул хушшинче Мускаври ӗççыннисен ыйтӑвӗсене пӗтӗмӗшпех тивӗçтерме кирлӗ чухлӗ купӑста, кишӗр, кӑшман пухса илме тытӑнаççӗ, помидорпа хӑяр лартса тӑвасси те нумай ӳсет.

Трибуна çинче—**И. С. Панькин** депутат (Сталинград облаçӗ). Вӑл совет халӑхӗ СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсене чун-чӗререн кӑмӑлласа йышӑнни çинчен калать. Сталинградри тата Сталинград облаçӗнчи тӗслӗхсемпе депутат совет халӑхӗ вӑрçӑ хыççӑн мирлӗ строительствӑра пысӑк çитӗнӳсем тунине кӑтартса парать. Облаçра промышленность производствин пысӑкӑшӗ 1953 çулта, 1940 çулхипе танлаштарсан, 74 процент ӳснӗ.

Д. С. Полянский депутат (Крым облаçӗ) хӑйӗн сӑмахӗнче Крым пуянлӑхӗсемпе усӑ курас ыйтусем çинче нумай чарӑнса тӑрать. Çулсеренех çӗнӗ санаторисемпе канмалли çуртсем ӗçлеме тытӑнаççӗ. 1946 çулта Крымри санаторисемпе канмалли çуртсенче 100 пин çын каннӑ, кӑçал курортниксемпе туристсен хисепӗ 400 пин çынтан иртет.

Н. Н. Коровецкая депутат (Орел облаçӗ), сессире тухса калакан ытти депутатсем пекех, Россия Федерацийӗн 1953 çулхи бюджечӗн проектне ырланӑ. Çав бюджетӑн тӗллевӗ—социализмла государствӑна малалла тӗреклетесси, унӑн экономикипе культурине аталантарасси. Государство бюджетӗнче, тет депутат, Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви çыншӑн, унӑн ырлӑхӗшӗн, унӑн культурӑллӑ аталанӑвӗшӗн тӑрӑшни палӑрса тӑрать.

Коровецкая юлташ облаçра выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ыйтусем çинче чарӑнса тӑрать. Выльӑх-чӗрлӗх йышӗ ӳсет, выльӑх-чӗрлӗх витисем тӑвас ӗç вара вӑраххӑн пырать. Çак ӗç кая юлса пынин тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри вӑл СССР Вӑрман тата хут промышленность министерстви йывӑç тӑратмалли плансене тултарманни пулать. СССР тата РСФСР Ялхуçалӑхӗпе хатӗрлев министерствисем область валли çителӗклӗ таран специалистсем уйӑрса памаççӗ.

РСФСР Вырӑнти тата топливо промышленность министрӗ **Н. Е. Чесноков** хӑйӗн сӑмахӗнче куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси ӳсни çинчен каласа панӑ. Вӑл çапла пӗлтерет: министерство предприятийӗсем кӑçал, тӗп плана тултарнисӗр пуçне, программӑран ирттерсе халӑх валли çур миллиард тенкӗлӗх таварсем туса кӑлармалла, 1954 çулта тӗп йышши продукци енӗпе пилӗкçулӑх вӗçленнӗ тӗле палӑртнӑ шая çитмелле. 34 сӗтелпукан фабрикине пысӑклатса çӗнетме тата çӗнӗрен 46 фабрика тума палӑртаççӗ.

С. Н. Низамов депутат çапла калать: ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванла çемйинче, аслӑ вырӑс халӑхӗ пысӑк пулӑшу панипе, Тутар республикинчи ӗççыннисем хуçалӑхпа культура строительствин пур облаçӗсенче те пысӑк çитӗнӳсем тунӑ. Вӗсем 1953 çулхи заданисене срокчен пурнӑçлассишӗн социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса янӑ.

Г. А. Бездомов депутат (Челябинск облаçӗ) хӑйӗн сӑмахӗнче Кӑнтӑр Уралти хуçалӑх ӳснине кӑтартакан цифрӑсемпе фактсем илсе кӑтартнӑ. Юлашки 25 çул хушшинче облаçри шултра промышленность продукцийӗ 59 хут ӳснӗ. Кӑнтӑр Уралти предприятисем патша Российӗ пӗтӗмпе туса кӑларнинчен нумайрах металл параççӗ. Кивӗ хуласем ӳсеççӗ, çӗнӗ хуласем çитӗнеççӗ. Пурӑнмалли çурт-йӗр тата культурӑпа йӑла строительствин хӑвӑртлӑхӗсем ӳсеççӗ. Анчах та çав хӑвӑртлӑхсем хуласенчи халӑх йышӗ ӳснинчен каярах юлса пыраççӗ. Çакӑншӑн металлурги, çӗр кӑмрӑк промышленность, электростанцисен, çул-йӗр министерствисем чылай енчен ответлӑ пулса тӑраççӗ. Вӗсем çуртсем, больницӑсем, коммунальнӑй учрежденисем тумалли плансене тӑтӑшах тултарса пымаççӗ.

А. Т. Щепликов депутат (Калинин облаçӗ) çапла пӗлтерет: юлашки икӗ çул хушшинче облаçри хуçалӑха аталантарма пӗр миллиард тенке яхӑн укçа-тенкӗ хывнӑ. Колхозсем государствӑран питех те пысӑк пулӑшу илнӗ. МТС-сенчи тракторсен паркӗн хӑвачӗ иртнӗ икӗ çул хушшинче 80 процент ӳснӗ. Самоходнӑй комбайнсен хисепӗ—7,5 хут, йӗтӗн тататакан машинӑсен шучӗ икӗ хута яхӑн ӳснӗ. Çакӑ вӑл акакан çӗр лаптӑкне пысӑклатма, тырпул тухӑçлӑхне ӳстерме май панӑ. Иртнӗ çулта облаçри колхозсем государствӑна вӑрçӑчченхи 1940 çулхинчен чылай ытларах йӗтӗн сӳсӗ панӑ. Депутат 1953 çулхи бюджет тӑрӑх укçа-тенкӗ ытларах уйӑрса пама палӑртни облаçри промышленноçа, ялхуçалӑхӗпе культурӑна малалла вӑйлатма май пани çинчен калать.

РСФСР Сывлӑх министрӗ **В. С. Степанов** сӑмах илет. Вӑл Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви ӗççыннисен сывлӑхӗшӗн хытӑ тӑрӑшни çинчен калать. Кӑçал РСФСР-та больницӑсенчи койкӑсен хисепӗ 30 пине яхӑн ӳсет, ача сачӗсем нумайланаççӗ; эмелсем туянма, больницӑра выртакан чирлӗ çынсене çитерекен апат-çимӗçе лайӑхлатма тата çӗршер миллион тенкӗ уйӑрса параççӗ.

М. Н. Шунько депутат (Кемерово облаçӗ) Кузбасра—çӗршыври тӗп çӗр кӑмрӑк бассейнӗсенчен пӗринче—çӗр кӑмрӑкӗ кӑларасси ӳсни çинчен калать. Вӑрçӑчченхипе танлаштарсан, çӗр кӑмрӑкӗ кӑларасси икӗ хут ӳснӗ, коксланакан кӑмрӑк кӑларасси икӗ хут çурӑ ӳснӗ. Халӗ бассейнри вӑтам шахта çулталӑк хушшинче революцичченхи Кузнецк бассейнӗнчи мӗнпур шахтӑсем кӑларнӑ чухлӗ çӑркӑмрӑкӗ парать. Бассейнри шахтӑсенче юлашки пилӗк çул хушшинче ӗç тухӑçлӑхӗ 50 процент ытла ӳснӗ.

Ӗççыннисен пурнӑçпа йӑла условийӗсем çултан-çул лайӑхланса пыраççӗ. Облаçри шахтерсем, химиксем, металлургсем, машиностроительсем иртнӗ çулта кӑна хӑйсем валли 15 пин ытла радиоприемник, 20,5 пин велосипед, 2.500 мотоцикл, 2 пин çӑмӑл автомашина туяннӑ.

Облаçшӑн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан ыйтусене татса пама çителӗксӗр пулӑшнӑшӑн Шунько юлташ чылай министерствӑсене критиклет.

К. В. Степанова депутат хӑйӗн сӑмахӗнче Совет государствин çитӗнӗвӗсене Ярославль облаçӗнчи, уйрӑммӑн илсен Ярославль районӗнчи тӗслӗхсемпе кӑтартса, парать. Юлашки çулсенче района пӗтӗмӗшпех электрификациленӗ; колхозсенче 300 ытла электромотор вырнаçтарса лартнӑ.

СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗн решенийӗсем, тет оратор, колхозниксен политикӑлла активлӑхне тата ӗçри хастарлӑхне çӗнӗрен ӳстерчӗç. Облаçри чылай ялхуçалӑх артелӗсем август уйӑхӗнчех государствӑна ялхуçалӑх продукчӗсем памалли мӗнпур обязательствӑсене пурнӑçласçӗ.

Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин ленинла-сталинла наци политики, тет **Г. Ц. Цыдынжапов** депутат (Бурят-Монгол АССР-ӗ), совет республикисене пурне те экономикӑпа культура тӗлӗшӗнчен чечекленме май парать. Сакӑ вӑл Бурят-Монгол АССР-ӗн бюджетӗнчен те уççӑн курӑнать. Бюджет, вӑрçӑчченхи 1940 çулхипе танлаштарсан, икӗ хут ытла ӳснӗ. Промышленноçа, ялхуçалӑхне малалла аталантарма, социально-культурӑллӑ ӗçсем валли нумай укçа-тенкӗ уйӑрса параççӗ.

Цыдынжапов депутат тухса калаçнӑ хыççӑн ирхи лару хупӑннӑ. (ТАСС).

РСФСР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧӖН ЛАРАВӖСЕМ

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗ çинчен тата РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен

РСФСР Финанс Министрӗ И. И. ФАДЕЕВ депутат тунӑ доклад

Депутат юлташсем! Россия Советлӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикӑн Верховнӑй Совечӗн виççӗмӗш сессийӗ пирӗн çӗршывӑн экономикипе культури çӗнӗрен пысӑк хӑватпа çӗкленсе пынӑ вӑхӑтра, Совет государствине унӑн тӗнчери авторитечӗ тата ытларах тӗрекленнӗ вӑхӑтра пуçа иртет.

Советлӑ социализмлӑ государство экономикӑпа культурӑна малалла вӑйлатмалли, ӗççыннисен материальнӑй пурнӑçне пӗрмаях лайӑхлатса пымалли аслӑ программӑна ӑнӑçлӑн пурнӑçлать.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховнӑй Совечӗн нумаях пулмасть пуçа иртнӗ пиллӗкмӗш сессийӗ пирӗн çӗршывӑн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан решенисем йышӑнчӗ. Совет халӑхӗ СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗ ССР Союзӗн 1953 çулхи Государство бюджечӗ çинчен тата ялхуçалӑх налогӗ çинчен йышӑннӑ законсене чӗререн хапӑл туса кӗтсе илчӗ, çак законсене хамӑрӑн Тӑван çӗршывӑн экономикӑлла пысӑк хӑватне уççӑн палӑртса тӑракан законсем, тесе тивӗçлипе хак пачӗ.

ССР Союзӗн çӗнӗ бюджечӗ тата ялхуçалӑх налогӗ çинчен йышӑннӑ закон халӑхӑн тӗп интересӗсене тивӗçтерессӗ, Коммунистсен партийӗпе Совет Правительстви социализмла халӑх хуçалӑхне малалла çӗклентерсе пырассишӗн, ӗççыннисен материальнӑй пурнӑçне пур майсемпе те малалла лайӑхлатса пырассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшнине кӑтартса парассӗ.

Совет государствин бюджечӗ—мирлӗ строительство бюджечӗ. Вӑл Совет державин мирлӗ пурнӑçа юратни çинчен ӗнентермелле каласа парать. Çавӑнпа ӗнтӗ ӑна пӗтӗм халӑх ырлать.

ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗнче каланӑ сӑмахра Совет государствин шалти тата тулашри политикине пур енчен те никӗсленсе пачӗ тата промышленноçпа ялхуçалӑхӗ енӗпе вӑраха ямасӑр пурнӑçламалли задачӑсене кӑтартса пачӗ. Çак задачӑсене пурнӑçлани тӗп задачӑна—рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мӗнпур совет çыннисен вӗçӗмсӗр ӳссе пыракан материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене пур енӗпе те тивӗçтермелли задачӑна тата ӑнӑçлӑрах пурнӑçлама май парать.

Çак аслӑ задачӑсемпе хавхаланса, Совет Союзӗнчи ӗççыннисем пиллӗкмӗш пилӗк çуллӑх плана срокчен тултарассишӗн социализмла ӑмӑртӑва тата анлӑрах сарса пыраççӗ. Çӗршывра рабочисен, колхоз хресченӗсен, интеллигенцин ӗçри хастарлӑхӗ кунран-кун ӳссе пырать, Совет Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ, вӗсен моральлӗ-политикӑллӑ пӗрлӗхӗ тата ытларах тӗрекленет.

Коммунистсен партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитечӗ тата Совет Правительстви тавра тачӑ пӗтӗçнӗ совет халӑхӗ коммунизм обществи тумалли çулпа çирӗппӗн те шанчӑклӑн малалла пырать.

РСФСР-ӑн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнӑçланин итогӗсем

Депутат юлташсем! Совет Союзӗнчи мӗнпур тӑванла халӑхсемпе пӗрле пирӗн Россия республикинчи халӑхсем те социализмлӑ экономикӑпа культура аталанӑвӗнче пысӑк çитӗнӳсем турӗç.

1951, 1952 çулсенче тата 1953 çулхи пӗрремӗш çур çулта республика промышленноçӗпе вырӑнти промышленность пӗтӗмпе продукци туса кӑлармалли плана ирттерсе тултарчӗç. Промышленность предприятийӗсенче производство организацийӗ пӗрмаях лайӑхланса пырать, предприятисем техникӑпа пуянланаççӗ, рабочисен культурӑлла шайӗ ӳсет. Çак никӗс çинче ӗç тухӑçлӑхӗ ӳсет тата продукцин хӑйне ларакан хакӗ чакать. Халӑх хуçалӑх планӗн заданийӗсене халӑх хуçалӑхӗн ытти отраслӗсенче те ӑнӑçлӑн пурнӑçланӑ.

Культура строительствинче пысӑк çитӗнӳсем тунӑ. Çичӗ çул вӗренмелли тата вӑтам шкулсенче вӗрентес ӗç вӑйланнӑ май шкулсенчи 5—10-мӗш классенче вӗренекенсен шучӗ чылай ӳсрӗ. Çавӑн пекех аслӑ шкулсемпе вӑтам специальнӑй шкулсенче вӗренекен студентсен шучӗ те ӳсрӗ. Хуласемпе ялсенче библиотекӑсем, клубсем тата ытти культурӑлла учрежденисем нумайланса пыраççӗ. Халӑха медицина пулӑшӑвӗ парасси лайӑхланчӗ.

Пирӗн республикӑри хуçалӑх строительствинчи çитӗнӳсем РСФСР Государство бюджетне пурнӑçланинче курӑнса тӑраççӗ. 1951 çулхи Государство бюджетне тупӑшсем енӗпе 55.821,0 миллион тенкӗ е 102,9 процент, расходсем енӗпе — 54.830,4 миллион тенкӗ е 101,3 процент пурнӑçланӑ. 1952 çулта тупӑшсем 54.769,0 миллион тенкӗ пулнӑ, урӑхла каласан, таварсен хакне йӳнетнине шута илсе, плана 100,6 процент тултарнӑ, расходсем 54.259,8 миллион тенкӗ пулнӑ е плана 99,9 процент тултарнӑ.

Производство ӳснӗ май, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетнӗ тата социализмла накопление ӳстернӗ май бюджет тупӑшӗнче государство предприятийӗсемпе хуçалӑх организацийӗсен тупӑшӗнчен килсе тӑракан укçа чылай ӳснӗ. Тупӑшсен çак çӑлкуçӗнчен 1952 çулта бюджета 11.296,9 миллион тенкӗ, 1951 çулхинчен 1.973,1 миллион тенкӗ ытларах, кӗнӗ.

Республикӑри халӑх хуçалӑхне 1951 тата 1952 çулсенче бюджетран 21.088,6 миллион тенкӗ, социальнӑй тата культурӑлла ӗçсем валли 76.128,7 миллион тенкӗ расходланӑ.

Государство бюджечӗ республикӑри халӑх хуçалӑх планӗ тӑрӑх хуçалӑхпа культурӑна аталантарма палӑртнӑ ӗçсене çителӗклӗ таран укçа-тенкӗ парса тӑма тата ӗççыннисен пурнӑçне лайӑхлатма пулӑшрӗ.

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗ

РСФСР Министрӗсен Совечӗ РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджетне РСФСР Верховнӑй Совечӗн хальхи сессине 57.552,2 миллион тенкӗ çирӗплетме тӑратать. Иртнӗ çулхипе танлаштарсан бюджет 3.292,4 миллион тенкӗ пысӑкрах пулать.

Бюджета тунӑ чухне РСФСР Министрӗсен Совечӗ халӑх хуçалӑх планне, çавӑн пекех совет халӑхӗн пурнӑçне малалла лайӑхлатас тӗлӗшпе правительство туса ирттерекен пысӑк ӗçсене шута илнӗ.

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗ республика промышленноçӗпе вырӑнти промышленноçа, ялхуçалӑхне, çурт-йӗрпе коммунальнӑй хуçалӑх строительствине, халӑха вӗрентес ӗçе, сывлӑха сыхлас ӗçе, социальнӑй обеспечени ӗçне малалла аталантарма кирлӗ таран укçа-тенкӗ парса тӑма май парать.

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗн тупӑшӗсем

Республика бюджечӗн тупӑшӗсенче промышленноçран тата халӑх хуçалӑхӗн ытти отраслӗсенчен пухӑнакан тӳлевсем, государство предприятийӗсемпе хуçалӑх организацийӗсен усламӗсенчен илекен укçа-тенкӗ тата оборотран илекен налог тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать. Çав тӳлевсем 1953 çулта 28.362,9 миллион тенкӗ пухӑнмалла. Вӗсен хисепӗ, 1952 çулхипе танлаштарсан, 9.889,3 миллион тенкӗ ӳсет, вӗсен бюджетри виçи 1952 çулта 33,7 процент пулнӑ пулсан, 1953 çулта 49,3 процент таран ӳсет.

Государство предприятийӗсемпе хуçалӑх организацийӗсен усламӗсенчен илекен укçа-тенкӗ 12.363,5 миллион тенкӗ, пӗлтӗрхинчен 1.066,6 миллион тенкӗ ытларах пухӑнмалла тума палӑртнӑ. Çавӑн чухлӗ укçа-тенкӗ 1953 çулта продукци ытларах туса кӑларнипе, тавар çаврӑнӑшне анлӑ сарнипе, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетнипе, государство предприятийӗсемпе хуçалӑх организацийӗсем тупӑш ытларах илсе ӗçленипе пухӑнмалла.

Усламран илекен укçа-тенке пуринчен ытларах çӑмӑл тата апат-çимӗç промышленноçӗн предприятийӗсем памалла. Çав предприятисенчен пӗтӗмпе 5.510,8 миллион тенкӗ е 1952 çулхинчен 1.420,5 миллион тенкӗ нумайрах пухӑнмалла. Коммунальнӑй предприятисем бюджета 2.191,3 миллион тенкӗ тата РСФСР Су-ту-илӳ министерствин предприятийӗсем 1.534,3 миллион тенкӗ памалла.

Бюджетра оборотран илекен налог пысӑк вырӑн йышӑнать, çав налог тӑрӑх бюджета 15.999,4 миллион тенкӗ кӗрет. Ку налога пухма çирӗплетнӗ план тӑрӑх республикӑра 1953 çулта 176.247,0 миллион тенкӗ пухмалла, çав шутран 160.247,6 миллион тенкӗ союз бюджетне памалла. Республикӑри тата вырӑнсенчи ӗçсене кӑна мар, государствӑн пӗтӗм союзри ӗçӗсене те пурнӑçлама укçа-тенкӗ çителӗклӗ парса тӑрасси РСФСР территорийӗнче оборотран илекен налог вӑхӑтра тата пӗтӗмпех пухӑннинчен килет.

Усламран илекен укçа-тенкӗсӗр тата оборотран тӳлекен налогсӑр пуçне, государствӑпа коопераци предприятийӗсем тата организацисем ытти тӳлевсем енӗпе хуçалӑхран бюджета 8.185,0 миллион тенкӗ памалла.

1953 çулта социализмла хуçалӑхран илекен тупӑшсем нумай ӳсеççӗ, çав вӑхӑтрах халӑхран пухӑнакан укçа-тенкӗ хисепӗ чакать. Государство заемӗсене сарнипе пухӑнакан укçа хисепӗ 3.706,2 миллион тенкӗ, 1952 çулхинчен 5.976,6 миллион тенкӗ сахалтарах пулмалла палӑртнӑ. Государствӑн халӑхран илекен налогӗсене 8.305,9 миллион тенкӗ пухма палӑртнӑ. СССР Верховнӑй Совечӗ Ялхуçалӑх налогӗ çинчен йышӑннӑ çӗнӗ закон тӑрӑх ку налог енӗпе пухӑнмалли пӗтӗм укçа хисепӗ РСФСР-та кӑçал 2 миллиард та 400 миллион тенкӗ чакать, çитес 1954 çулта ялхуçалӑх налогӗн хисепӗ, 1952 çулхипе танлаштарсан, икӗ хут çурӑ ытларах чакать. Ялхуçалӑх налогӗ çинчен йышӑннӑ çӗнӗ закон колхозсене организаципе хуçалӑх тӗлӗшӗнчен çирӗплетме, ялхуçалӑхне малалла аталантарса пыма, колхозниксен тупӑшӗсене ӳстерме пулӑшать.

Бюджета тупӑшсем вӑхӑтра тата тулли пухӑнса пычӑр тесен, кашни предприятин питӗ лайӑх тата палӑртса хунӑ ассортиментлӑ продукци туса кӑлармалли производство планӗсене пӗтӗмпех тултарса пымалла, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетмелли заданисене пурнӑçламалла, хуçалӑх расчетне пур майсемпе те çирӗплетсе, укçа-тенке тата пурлӑха перекетлемелли йӗркене çирӗппӗн пурнӑçласа пымалла.

РСФСР-ӑн 1953 çулхи Государство бюджечӗн расходӗсем

Промышленность, ялхуçалӑхӗ тата халӑх хуçалӑхӗн ытти отраслӗсем валли, социально-культурӑллӑ ӗçсем валли паракан укçа-тенкӗ РСФСР Государство бюджечӗн тӗп расходӗсем пулса тӑрать. Çав ӗçсене тума 1953 çулта 51.917,3 миллион тенкӗ е республика бюджетӗнчи укçа-тенкӗн вунӑ пайӗнчен тӑхӑр пайӗ чухлӗ пама палӑртнӑ. Çав шутран халӑх хуçалӑхне 10.927,0 миллион тенкӗ тата социально-культурӑллӑ ӗçсем валли 40.990,3 миллион тенкӗ памалла. Государство управленийӗн органӗсене тытса тӑма каякан расходсем пӗтӗмпе 4.831,1 миллион тенкӗ тата ытти расходсем пӗтӗмпе 703,8 миллион тенкӗ пулаççӗ.

Укçа-тенке çакӑн пек расходланинчен РСФСР-ӑн Государство бюджечӗ производительнӑй вӑйсене малалла аталантармалли тата ӗççыннисен пурнӑçне лайӑхлатса пымалли задачӑсене пурнӑçлас тӗллеве пӑхӑнса тӑни курӑнать.

Хуçалӑх ӗçӗсене пурнӑçлама каякан расходсенчен промышленноçа 1.072,5 миллион тенкӗ, ялхуçалӑхне 3.288,9 миллион тенкӗ, пурӑнмалли çуртсемпе коммунальнӑй хуçалӑх валли 4.306,5 миллион тенкӗ, çул-йӗр хуçалӑхӗпе транспорт валли 746,6 миллион тенкӗ памалла. Пӗлтӗрхипе танлаштарсан, кӑçал бюджетран халӑх хуçалӑхне памалли расходсен хисепӗ 728,3 миллион тенкӗ чухлӗ ӳсет.

Кунта çакна та шута илмелле: бюджетран панӑ укçасӑр пуçне, халӑх хуçалӑхне аталантарма предприятисемпе хуçалӑх организацийӗсен хӑйсен укçа-тенкинчен татах 8.198,2 миллион тенкӗ каять. Çапла вара, республика халӑх хуçалӑхне валли тухакан расходсен пӗтӗм хисепӗ 1953 çулта 19.125,2 миллион тенке çитет, çак хисеп вӑл 1952 çулхинчен 2.077,0 миллион тенкӗ нумайрах.

Кӑçал РСФСР хуçалӑхӗн пур отраслӗсенче те капитальнӑй ӗçсен пысӑк программине пурнӑçласа пыраççӗ. Çав ӗçсене пурнӑçлама 7.807,0 миллион тенкӗ, вӑл шутра бюджетран 5.806,1 миллион тенкӗ, предприятисен хӑйсен ресурсӗсенчен тата строительствӑри ӗçсен хӑйне ларакан хакне йӳнетсе 2.000,9 миллион тенкӗ расходламалла.

Çӗнӗ фабрикӑсем, заводсем, коммунальнӑй предприятисем тунӑ вӑхӑтрах, пурӑнмалли çуртсем, шкулсем нумай лартма, сывлӑха сыхлакан учрежденисем, ача сачӗсем, яслисем, кинотеатрсем тата ытти культурӑпа йӑла учрежденийӗсем нумай туса лартма палӑртнӑ.

Государствӑн капитальнӑй строительствин — РСФСР министерствисемпе ведомствисем пурнӑçласа пыракан строительство ӗçӗсен хисепӗ 1953 çулти пӗрремӗш çур çулта, 1952 çулти малтанхи çур çултипе танлаштарсан, 14 процент ӳснӗ. Министерствӑсем тата вырӑнти Советсем енӗпе пурӑнмалли çуртсем лартма кӑçалхи пӗрремӗш çур çулта, пӗлтӗрхи пӗрремӗш çур çултипе танлаштарсан, 22 процент ытларах укçа-тенкӗ панӑ.

Бюджетран социально-культурӑллӑ ӗçсем валли пама палӑртнӑ укçаран халӑха вӗрентес ӗçе 22.307,8 миллион тенкӗ, сывлӑха сыхлас ӗçпе физкультура ӗçӗ валли 13.179,2 миллион тенкӗ, социальнӑй страхованипе социальнӑй обеспечени валли 5.503,3 миллион тенкӗ расходламалла.

Шкулсене тытса тӑма 12.084,0 миллион тенкӗ пама палӑртнӑ. Çавӑн чухлӗ укçа пама палӑртнӑ чухне хальхи пилӗкçуллӑх вӗçленнӗ тӗле республикӑсен столицисенче, республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласенче, облаçсемпе крайсен центрӗсенче тата промышленноçлӑ пысӑк центрсенче пур ачасене те çичӗ çул вӗрентмелли йӗркерен пурне те вӑтам шкултан вӗрентсе кӑлармалли йӗркене куçассине пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе правительство туса пыракан ӗçсене шута илнӗ.

Аслӑ шкулсене тата специалистсем хатӗрлекен вӑтам шкулсене тытса тӑма, çавӑн пекех тата кадрсем хатӗрлеме, вӗсен квалификацине ӳстерме 3.133,7 миллион тенкӗ уйӑрса пама палӑртнӑ.

1953—1954-мӗш вӗренӳ çулӗнче шкулсенче 16.667 çын вӗренмелле, çав шутра 5—10-мӗш классенче иртнӗ вӗренӳ çулӗнче пулнинчен миллион ача ытларах пулмалла. Ялсенче ачасене вӑтам шкулсенче вӗрентес ӗçе анлӑн сарма кирлӗ условисем тума бюджетран шкулсен интерначӗсене тытса тӑма 434 миллион тенкӗ расходлама палӑртнӑ, çав интернатсене вӑтам шкулсенче вӗренекен 430.000 ачана, 1952—1953-мӗш вӗренӳ çулӗнче пулнинчен 93.000 ача нумайрах вырнаçтармалла.

Аслӑ шкулсенче тата специалистсем хатӗрлекен вӑтам шкулсенче 833.000 çын вӗренмелле. Кӑçал педагогсем вӗрентсе хатӗрлекен аслӑ шкулсен шучӗ чылай ӳсет. Учительски институтсен никӗсӗ çинче 12 çӗнӗ аслӑ шкул уçӑлать. Педагогика шкулӗсенче вӗренекенсен пӗтӗм йышӗ 470.000 çынна çитет. Вӗсене вӗрентме 1.290 миллион тенкӗ расходламалла.

Врачсем тата вӑтам пӗлӳллӗ медицина работникӗсем хатӗрлес, вӗсен квалификацине ӳстерес ӗç валли укçа-тенкӗ нумай уйӑрса пама палӑртнӑ. Çитес вӗренӳ çулӗнче медицина институчӗсенче, шкулӗсенче, врачсен пӗлӗвӗсене ӳстерекен институтсенче 136.000 çын вӗренмелле.

Ялхуçалӑхӗ валли кадрсем хатӗрлеме 601 миллион тенкӗ расходлама палӑртнӑ.

Ача-пӑча учрежденийӗсене тытса тӑма 2.959,0 миллион тенкӗ памалла. Ача сачӗсенче тата ача çурчӗсенче 700 пин ача ытла усраса вӗрентсе ӳстермелле.

Наука енӗпе тӗпчев ӗçӗсем тума 468,4 миллион тенкӗ пама палӑртнӑ. Бюджет проектӗнче библиотекӑсене, клубсене, культура çурчӗсене тата ытти культурӑпа çутӗç учрежденийӗсене тытса тӑма 1.157,9 миллион тенкӗ памалли çинчен каланӑ. Ялти библиотекӑсен шучӗ ӳсет. 1953 çулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне ялсенче 13.154 библиотека пулнӑ пулсан, 1954 çулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 18.760 библиотека пулмалла. Ялти клубсем 24.191 пулнӑ пулсан, 1954 çулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 25.551 клуб пулмалла.

Кинотеатрсен шучӗ те ӳсет. Республикӑра 26.730 киноустановка ӗçлемелле. Ку шута профсоюзсен киноустановкисем кӗмеççӗ. Çӗнӗ кинотеатрсем лартма тата вӗсем валли оборудовани туянма бюджетран 85,0 миллион тенкӗ уйӑрса пама палӑртнӑ.

РСФСР Государство бюджетӗнчен сывлӑха сыхлас ӗçпе физкультура ӗçӗ валли панӑ укçа-тенкӗ пӗлтӗрхинчен 1.192,9 миллион тенкӗ ытларах пулать. Чир-чӗртен сыватакан тата профилактика учрежденийӗсене—9.025,5 миллион тенкӗ, ача-пӑча сывлӑхне сыхлас енӗпе ӗçлекен профилактика учрежденийӗсене — 1.341,3 миллион тенкӗ, санитари енӗпе тумалли ӗçсене пурнӑçлама 756,6 миллион тенкӗ памалла.

Çак укçа-тенкӗ больницӑсене, диспансерсене, ача çуратмалли çуртсене, санаторисене, ача-пӑча учрежденийӗсене пурне те тытса тӑма çителӗклӗ. Çавӑн пекех ку укçа-тенкӗ хуласемпе ялсенчи больницӑсенче койкӑсен шутне 28,4 пин койка чухлӗ ӳстерме тата ача яслисенче вырӑнсен шутне 12,2 пин вырӑн чухлӗ ӳстерме каять.

СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ больницӑсене, поликлиникӑсене тата ытти медицина учрежденийӗсене укçа хушса пама йышӑнчӗ,—çак бюджетра асӑннӑ учрежденисене укçа хушса памалла тунӑ. Больницӑра выртакан чирлӗ çынсене паракан апат нормине ӳстерме—303,1 миллион тенкӗ, медикаментсем туянма—128,3 миллион тенкӗ, чирлӗ çынсем валли кӗпе-йӗм туянма—183,1 миллион тенкӗ, хуçалӑхра кирлӗ япаласем туянма—159,5 миллион тенкӗ, сывлӑх учрежденийӗсене тӗпрен юсама 77,2 миллион тенкӗ хушса пама палӑртнӑ. Çакӑн чухлӗ укçа хушса пани халӑха медицина тата санитари пулӑшӑвӗ парас ӗçе лайӑхлатма пулӑшать.

Социальнӑй страхованипе социальнӑй обеспечени валли паракан укçа-тенкӗ хисепӗ те пӗлтӗрхинчен ӳсет.

Республикӑн государство аппаратне малалла лайӑхлатма кирлӗ ӗçсене тунӑ май, государство управленийӗн органӗсене тытса тӑма тухакан расходсен хисепӗ 126,3 миллион тенкӗ чакать.

Министерствӑсем, ведомствӑсем, вырӑнти Советсен исполкомӗсем пур майсемпе те тӑрӑшнипе государство управленийӗн органӗсен ӗçӗсене лайӑхлатмалла тата вӗсене тытса тӑма тухакан расходсене чакармалла.

Крайсен, облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсем

РСФСР Министрӗсен Совечӗ проектра палӑртнӑ тӑрӑх крайсен, облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсем пӗтӗмпе 43.399,6 миллион тенкӗ, пӗлтӗрхинчен 1.948,0 миллион тенкӗ ытларах пулмалла.

Крайсен, облаçсен, республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласен, автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсем çакӑн чухлӗ (пиншер тенкӗпе шутласан) пулмалла туса çирӗплетме тӑрататпӑр:

Алтай крайӗ	769.334
Краснодар крайӗ	1.061.880
Сочи хули	56.747
Красноярск хули	105.703
Красноярск крайӗ	712.784
Приморье крайӗ	433.093
Ставрополь крайӗ	589.569
Хабаровск крайӗ	837.007
Амур облаçӗ	284.983
Архангельск облаçӗ	497.053
Астрахань облаçӗ	283.846
Брянск облаçӗ	473.644
Великие Луки облаçӗ	285.824
Владимир облаçӗ	475.444
Вологда облаçӗ	525.465
Воронеж облаçӗ	899.743
Горький хули	334.219
Горький облаçӗ	768.260
Грозный облаçӗ	249.030
Иваново облаçӗ	550.753
Иркутск облаçӗ	546.729
Калининград облаçӗ	278.507
Калинин облаçӗ	622.478
Калуга облаçӗ	375.946
Кемерово облаçӗ	722.176
Киров облаçӗ	711.145
Кострома облаçӗ	367.235
Крым облаçӗ	410.327
Севастополь хули	114.512
Куйбышев хули	263.245
Куйбышев облаçӗ	457.409
Курган облаçӗ	340.391
Курск облаçӗ	725.061
Ленинград хули	1.977.837
Ленинград облаçӗ	521.848
Молотов хули	201.327
Молотов облаçӗ	754.853
Мускав хули	3.716.066
Мускав облаçӗ	186.525,7
Мурманск облаçӗ	259.032
Новгород облаçӗ	328.552
Новосибирск хули	261.729
Новосибирск облаçӗ	445.957
Омск хули	158.529
Омск облаçӗ	389.702
Орел облаçӗ	458.391
Пенза облаçӗ	484.161
Псков облаçӗ	267.511
Дон çинчи Ростов хули	218.653
Ростов облаçӗ	783.689
Рязань облаçӗ	592.970
Саратов хули	208.190
Саратов облаçӗ	587.913
Сахалин облаçӗ	464.199
Свердловск хули	304.994
Свердловск облаçӗ	1.022.991
Смоленск облаçӗ	486.621
Сталинград хули	213.946
Сталинград облаçӗ	494.005
Тамбов облаçӗ	509.218
Томск облаçӗ	300.136
Тува автономиллӗ облаçӗ	128.209
Тула облаçӗ	506.856
Тюмень облаçӗ	477.447
Ульяновск облаçӗ	376.802
Челябинск хули	205.846
Челябинск облаçӗ	654.374
Чита облаçӗ	372.986
Чкаловск облаçӗ	593.240
Ярославль облаçӗ	535.826
Тутар АССР-ӗ	996.992
Вӑл шутра: Хусан хули	192.133
Пушкӑрт АССР-ӗ	990.825
Вӑл шутра: Уфа хули	90.924
Дагестан АССР-ӗ	423.824
Бурят-Монгол АССР-ӗ	268.430
Кабардин АССР-ӗ	168.559
Коми АССР-ӗ	251.676
Мари АССР-ӗ	249.731
Мордва АССР-ӗ	350.416
Çурçӗр Осетин АССР-ӗ	216.163
Удмурт АССР-ӗ	456.767
Чӑваш АССР-ӗ	349.034
Якут АССР-ӗ	417.745

Крайсемпе облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсем çултан-çул ӳсеççӗ. Вӑрçӑ умӗнхи вӑхӑтпа танлаштарсан, вӗсен бюджечӗсен пысӑкӑшӗ икӗ хут ытларах ӳснӗ—1940 çулта 18.462,6 миллион тенкӗ пулнӑ пулсан, 1953 çулта 43.399,6 миллион тенке çитнӗ.

Крайсен, облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен 1951 тата 1952 çулсенчи бюджечӗсене ӑнӑçлӑ пурнӑçланӑ. Çапах та çакна каламалла: вырӑнти хуçалӑх резервӗсене лайӑхрах шута илсе ытларах усӑ курнӑ пулсан, вырӑнти Советсен исполкомӗсем хӑйсен бюджечӗсене лайӑхрах пурнӑçланӑ пулӗччӗç.

Акӑ, тӗслӗхрен, Ставрополь крайӗнче 1952 тата 1953 çулсенчи бюджета тунӑ чухне крайисполком промышленноçри, коммунальнӑй хуçалӑхри, потребительсен кооперацийӗнчи тупӑшсене чылайӑшне шута илмен пулнӑ. Хӑшпӗр облаçсен бюджечӗсенче те çавӑн пекех тупӑшсене пӗтӗмпех шута илмен.

Çавӑн пекех тата çакна та палӑртмалла: Брянск, Орел тата Тамбов облаçӗсенче тупӑшсем енӗпе бюджета вӑхӑтра тултарайман, Красноярск крайӗнче вара бюджета тивӗçсӗр пӑсса укçа-тенкӗ расходлани те пулнӑ. Малашне вырӑнти Советсен исполкомӗсемпе автономиллӗ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсен предприятисенче хуçалӑхпа финанс ӗçне йӗркелесси çине тимлӗрех çаврӑнса пӑхса, тупӑшсене пӗтӗмпех пухмалла тӑвас тата хӑйсене пӑхӑнса тӑракан учрежденисемпе предприятисем тата учрежденисем укçа-тенкӗпе тӗрӗс усӑ курмалла тӑвас тӗлӗшпе кирлӗ ӗçсене тумалла.

Крайсемпе облаçсен тата автономиллӗ республикӑсен бюджечӗсенче пилӗк пайӗнчен икӗ пайӗ районсен тата ялсен бюджечӗ шутланать. Районсен тата ялсен бюджечӗсем 1952 çулта 15,5 миллиард тенке çитнӗ,—вӑрçӑ умӗнхи 1940 çулта 6,8 миллиард тенкӗ пулнӑ. Çав бюджетсенчен иртнӗ çулта социально-культурӑлла учрежденисем валли 12,8 миллиард тенкӗ ытларах расходланӑ пулнӑ,—1940 çулта çавӑн пек расходсем 5,1 миллиард тенкӗ пулнӑ. Районсемпе ялсен бюджечӗсенчен 1952 çулта 109.086 шкула, 15.674 библиотекӑна, 42.127 ялти клубсемпе вулав çурчӗсене, больницӑсене, ача çуратмалли çуртсене тата 150.935 койка шутланакан сыватакан ытти учрежденисене, 144.096 вырӑн шутланакан ача яслисене тата ытти учрежденисене укçа-тенкӗ парса тӑнӑ.

Хуçалӑхпа культура строительствинче районсемпе ялсен бюджечӗ пысӑк вырӑнта тӑраççӗ пулин те, хӑшпӗр крайисполкомсем, облисполкомсем тата автономиллӗ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем çав бюджетсем çине кирлӗ пек пӑхмаççӗ. Çавӑн пирки чылай çӗрте ял бюджечӗсене вӑхӑтра çирӗплетмеççӗ, ялти учрежденисене ӗçлеме кирлӗ укçа-тенке вӑхӑтра памаççӗ. Тӗслӗхрен, Свердлов облаçӗнче тата Пушкӑрт АССР-ӗнче 1952 çулхи бюджета пӗтӗмӗшпе илсен çителӗклӗ пурнӑçланӑ пулин те, ял бюджечӗсем енӗпе расходлассине чылай тултарайман.

Ялти çынсем ыйтнине тивӗçтерме тивӗçлӗ учрежденисене укçа-тенкӗ парса тӑрассинче район тата ял бюджечӗн пӗлтерӗшӗ ӳсни вырӑнти Советсен исполкомӗсене çав бюджетсене тӑвассине тата бюджетсене пурнӑçлассине лайӑхрах ертсе пыма хушать.

Предприятисен, организацисен тата учрежденисен финанспа хуçалӑх ӗçне малалла лайӑхлатассишӗн

Депутат юлташсем! РСФСР-ӑн 1953 çулхи халӑх хуçалӑх планӗпе Государство бюджетне ӑнӑçлӑ пурнӑçлама халӑх хуçалӑхӗн мӗнпур отраслӗсенче хуçалӑхпа финанс ӗçӗсене малалла лайӑхлатни кирлӗ.

Республика тата вырӑнти промышленность производство планӗсене, ӗç тухӑçлӑхне ӳстермелли тата продукцин хӑйне ларакан хакне чакармалли заданисене тултарать тата социализмла накопление çултан-çул ӳстерет. Иртнӗ çул республика промышленноçӗ производство планне 102 процент тултарнӑ, предприятисенче ӗç тухӑçлӑхӗ, 1951 çулхипе танлаштарсан, 7 процент ӳснӗ, продукцин хӑйне ларакан хакӗ 6 процента яхӑн чакнӑ. Кӑçалхи çулӑн малтанхи çулӗнче промышленность производство планне 100.3 процент тултарнӑ, ӗç тухӑçлӑхӗ 1952 çулӑн малтанхи çур çулӗнчипе танлаштарсан 6 процент ӳснӗ тата продукцин хӑйне ларакан хакӗ 4 процента яхӑн чакнӑ.

Пурте пӗлеççӗ, ӗç тухӑçлӑхӗпе продукцин хӑйне ларакан хакӗ промышленноçӑн пӗтӗм ӗçӗнчи пахалӑхне кӑтартса тӑраççӗ, ӗç тухӑçлӑхне ӳстернипе продукцин хӑйне ларакан хакне чакарни государствӑшӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗç пулать. «Производствӑн мӗнпур отраслӗсенче продукцин хӑйне ларакан хакне чакарасси тата ӗç тухӑçлӑхне ӳстересси, — тенӗ Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗнче тухса каланӑ сӑмахра,—совет халӑхӗн материальнӑй пурнӑçне лайӑхлатас ӗçре татӑклӑ вырӑн йышӑнса тӑраççӗ. Пирӗн предприятисенче ӗç тухӑçлӑхӗ мӗн чухлӗ пысӑкрах, продукцин хӑйне ларакан хакӗ мӗн чухлӗ пӗчӗкрех, çавӑн чухлӗ мӗнпур продуктсемпе таварсен хакӗ йӳнӗрех, халӑхӑн пурнӑç шайӗ çавӑн чухлӗ пысӑкрах пулать».

Маленков юлташ çакӑн пек кӑтартса пани уйрӑмах республика промышленноçӗпе вырӑнти промышленноçӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Пирӗн ӗç тухӑçлӑхӗ пӗчӗккӗ пулнӑ пирки производство планӗсемпе продукцин хӑйне ларакан хакне чакармалли заданисене тултарман предприятисем çеç мар тата промышленность отраслӗсем те пур-ха.

РСФСР Строительство материалӗсем тӑвакан промышленность министерствин предприятийӗсем 1952 çулта пӗтӗмпе продукци туса кӑлармалли плана 94,8 процент кӑна тултарнӑ. Вӑл шутран хӗрлӗ кирпӗч туса кӑлармалли плана 92,8 процент, силикат-кирпӗч туса кӑлармалли плана 92,1 процент кӑна тултарнӑ. Заводсенче производствӑн çӗнӗ хӑвачӗсене ӗçе вӑхӑтра кӗртсе пыман, оборудованипе туллин усӑ курман, хӗллехи условисенче ӗçлеме начар хатӗрленнӗ. «Россиликаткирпич» тресчӗн предприятийӗсенче прессем ӗç вӑхӑтне 16,7 процент усӑсӑр тӑрса ирттернӗ, экскаваторсем 13,1 процент усӑсӑр тӑнӑ. Производство планне тултарман пирки тата продукцин хӑйне ларакан хакне ӳстернӗ пирки строительство материалӗсем тӑвакан промышленность план тӑрӑх 22,3 миллион тенкӗ тупӑш парас вырӑнне 3,2 миллион тенкӗ убыток панӑ.

Республикӑна пӑхӑнса тӑракан вырӑнти промышленность предприятийӗсем иртнӗ çулта продукци туса кӑлармалли плана 102,6 процент тултарнӑ, анчах та план тӑрӑх туса кӑларма палӑртнӑ 73 тӗслӗ продукцирен производство программине 43 изделии тӑрӑх кӑна тултарнӑ. Вырӑнти промышленноçӑн нумай заводӗсем çаплах начар продукци туса кӑлараççӗ-ха. Фарфорпа фаянс промышленноçӗн тӗп управленийӗн предприятийӗсенче продукцин сортлӑхне чакарнине пула çухатусем 6,1 миллион тенкӗлӗх пулнӑ. Вырӑнти промышленность заводӗсенче вырӑнсӑр тӑкаксем нумай тӑваççӗ, смета дисциплинине пӑсаççӗ, цехсемпе заводсенчи расходсене ӳстереççӗ. 1952 çулта республикӑна пӑхӑнса тӑракан вырӑнти промышленность предприятийӗсенче цехсенчи расходсене 6,5 миллион тенкӗлӗх, производство расходӗсене 15,1 миллион тенкӗлӗх ӳстернӗ. Çаксене пула республикӑна пӑхӑнса тӑракан вырӑнти промышленность предприятийӗсем продукцин хӑйне ларакан хакне чакармалли задание тултарман, накоплени тумалли плана 15,9 миллион тенкӗлӗх тултарса çитермен, бюджета чылай укçа парса çитереймен.

Халӑх хуçалӑх планӗн заданийӗсене çӑмӑл тата апат-çимӗç промышленноçӗн предприятийӗсем те нумайӑшӗ тултарман. Çак отраслӗн предприятийӗсенче вырӑнсӑр расходсем пысӑк пулаççӗ. Эрех промышленноçӗ иртнӗ çулта 25 миллион тенкӗлӗх ытла вырӑнсӑр расходсем тунӑ, ку вӑл, паллах, продукцин хӑйне ларакан хакне ӳстерме кӑна пултарнӑ.

(Юлашки 3-мӗш страницӑра).

РСФСР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1951 тата 1952 çулсенчи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра).

Çăмăл промышленноçăн чылай предприятийĕсем пĕр тикĕс ĕçлемеççĕ. Рязань облаçĕнчи Спасскри тир-сăран завочĕ 1952 çулта çулталăк тăршшĕпех уйăхра туса кăлармалли продукцин çуррине тенĕ пекех уйăхăн юлашки вунăкунлăхĕнче кăларса тăнă, çавăн пирки те завод производство программине тултарман, продукцин хăйне ларакан хакне 7,7 процент ÿстернĕ. Çăмăл промышленноçăн чылай предприятийĕсенче продукцин хăйне ларакан хакне ÿстерни оборудованипе начар усă курнинчен килнĕ. Çакăн пек предприятисен шутне, уйрăммăн илсен, Ростоври тата Горькири чăлха фабрикисем, Новосибирскри сыхнă тумтир тăвакан фабрика кĕреççĕ.

Шалти резервсене мобилизацилес ĕçре продукцин хăйне ларакан хакне тĕрĕс планлани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав вăхăтрах ку ĕçре нумай çитменлĕхсем пур-ха. Чылай чухне министерствăсен тĕп управленийĕсем чĕртаварпа материалсем расходламалли нормăна ÿстерсе йышăнаççĕ, пысăк сортлă продукци туса кăлармалли задание чакарса параççĕ, цехсемпе заводсен расхочĕсен сметисене ытлашши ÿстерсе яраççĕ. Тĕслĕхрен, РСФСР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерствин сыхнă тумтирсем тăвакан промышленноçăн тĕп управленийĕ 1952 çул валли чăлха-носкисен хăйне ларакан хакне планланă чухне чĕртавар ытлашши расходлама палăртнă. Çип расходламалли плана нимĕн сăлтавсăр ку таранччен пулнă шайран 10 процент ытла ÿстернĕ.

Пир-авăрпа галантерея промышленноçĕн предприятийĕсенче уйрăм изделисем тăрăх пĕрремĕш сортлă продукци туса кăларассине иртнĕ çулхипе танлаштарсан сахалтарах кăтартса панă. Çакна пула накоплени тăвасси тата бюджета укçа уйăрса парасси чакнă.

Министерствăсемпе вĕсен тĕп управленисем убытокпа ĕçлекен предприятисен шутне тата вĕсен убыточĕсене чакарма кирлĕ ĕçсене çителĕклĕ тумаççĕ. Кун çинчен çак факт каласа парать: 1952 çул валли тунă планра министерствăсем нумай предприятисем тăрăх, уйрăммăн илсен, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçĕн республикăри 82 предприятийĕ тăрăх, вырăнти тата топливо промышленноçĕн 35 предприятийĕ тăрăх, вăрман тата хут промышленноçĕн 33 предприятийĕ тăрăх тата строительство материалĕсем тăвакан промышленноçăн 26 предприятийĕ тăрăх убыток тума пăхса хунă. Çак предприятисен убыткне ытти, лайăх ĕçлекен предприятисен шучĕпе витсе тăмалла пулнă. Çакнашкал практика хуçалăх расчечĕн никĕсне вайсăрлатнă, государство бюджечĕн тупăшĕсене ÿстерме паман.

Укçа-тенке перекетлеме коммунальнăй хуçалăхра пысăк резервсем пур. Коммунальнăй электростанцисем иртнĕ çул электроэнерги туса кăларассине, 1951 çулхипе танлаштарсан, 7 процент ÿстернĕ. Çав вăхăтрах вĕсем электроэнерги панă чухне 13 процента яхăн çухатнă. Брянск облаçĕнчи коммунальнăй электростанцисем электроэнергине 22 процент таран, Калуга облаçĕнчи коммунальнăй станцисенче 25 процент таран çухатнă.

Коммунальнăй водопроводсем шыв парса тăмалли плана, пĕтĕмĕшпе республикине илсен, иртнĕ çулта ирттерсе тултарнă. Анчах та 71 хулари водопроводсем шыв парса тăрас тĕлĕшпе хăйсем валли çирĕплетнĕ заданисене пурнăçламан, çавăн пекех тата усăсăр расходсем чылай тунă. Çакă вăл халăха шыв парса тăрассине кирлĕ пек туса пыма кансĕрленĕ тата халăха парса тăракан шывăн хăйне ларакан хакне ÿстернĕ.

Строительство организацийĕсенче ĕçĕн хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн тата перекетлĕх режимĕшĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. РСФСР Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин строительство тресчĕсем 1952 çулта, планпа строительство хакне 3,0 процент йÿнетме палăртнă пулсан, 5,6 процент ÿстернĕ, çавна май вара, тупăш илес вырăнне, убыток курнă.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин Курск облаçĕнчи тресчĕ ĕçе çителĕксĕр организаленĕ пирки пĕлтĕр строительство планне тултарман, ĕçсен хакне сметăпа пăхнинчен 664 пин тенкĕ чухлĕ ÿстернĕ, пĕр миллион тенкĕ ытла убыток тунă. Трест кăçал та япăх ĕçлет. Пĕрремĕш çур çулта строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне пурĕ те 67,9 процент çеç тултарнă, строительство хакне 8,4 процент ÿстернĕ, çавна пула çĕнĕрен 974 пин тенкĕ убыток тунă.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин юлса пыракан трестсен ĕçне лайăхлатма татăклă ĕçсем тăвас пулать.

РСФСР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин хăшпĕр совхозĕсемпе ытти организацисенче перекетлĕх режимне пурнăçламаççĕ. Пушкăрт АССР-ĕнчи чылай совхозсенче 1952 çулта ытлашши расходсем тунă пирки уй-хирте туса илекен тата выльăх-чĕрлĕхрен илекен мĕнпур йышши продукци хакне ÿстернĕ. Чкалов облаçĕнчи совхозсенче те укçа-тенкĕпе материалсене плана палăртнинчен ытларах расходланă. Çак министерствăн строительство управленийĕн вăрман хатĕрлекен кантурĕсем финанс дисциплинине пăснă, Ставропольри вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен кантурах законсăр йĕркепе 5,8 миллион тенкĕ расходланă.

РСФСР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин совхозсен тата хăйне пăхăнса тăракан ытти предприятисен финанспа хуçалăх ĕçне лайăхлатмалла, государство укçа-тенкине тĕрĕс тата перекетлĕн расходламалла тăвас пулать.

Предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен ĕçĕнче ытти пысăк çитменлĕхсем те пур. Нумай предприятисем хăйсем валли уйăрса панă оборотри укçа-тенке упрамаççĕ. Çакăн пек предприятисем уйрăмах РСФСР Вăрман тата хут промышленность министерствипе Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерствин системинче нумай.

Çак министерствăсене, вĕсене пăхăнса тăракан предприятисемпе организацисен оборотри хăйсен укçи-тенкине çителĕклĕ тăвас шутпа, РСФСР Министрĕсен Совечĕ финанс тĕлĕшĕнчен пулăшу пачĕ.

Пулăшу панă пулин те, Вăрман тата хут промышленность министерствипе Пурăнмалли çурт-йĕрпе гражданла строительство министерстви хăйсене пăхăнса тăракан нумай предприятисенче 1953 çулхи пĕрремĕш çур çулта хăйсен оборотри укçи-тенкине упрамалла туман.

Министерствăсемпе ведомствăсен предприятисенче хăйсен оборотри укçи-тенкипе усă курассине лайăхлатма кирлĕ ĕçсене тумалла.

Государство бюджечĕн тупăшĕсенче суту-илÿ организацийĕсен тÿлевĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Республикăра ваккăн сутакан тавар çаврăнăшĕ кварталтан квартала ÿссе пырать. Тавар хакĕсене йÿнетнĕ, халăха кирлĕ таварсем туса кăларасси ÿснĕ май тата сутмалли таварсен фончĕсене ÿстерес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ытти ĕçсене пула, 1953 çулхи II-мĕш кварталта, 1952 çулхи II-мĕш кварталтипе танлаштарсан, халăха 23 процент нумайрах тавар сутнă. Çакănпа пĕрлех ассортимент пĕрмай пысăкланса, таварсен пахалăхĕ лайăхланса пырать, тавар илекенсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессi аваналать.

Анчах та, калас пулать, суту-илÿ организацийĕсен ĕçĕнче, çавăн пекех РСФСР Суту-илÿ министерствин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Халăха мĕнле таварсем кирлине çаплах çителĕксĕр тĕпчесе пĕлеççĕ, ĕçсыннисен ыйтăвĕсем ÿссе пынине шута илмеççĕ. Нумай суту-илÿ организацийĕсен руководителĕсем тавар тăратакансен умне пысăк требованисем лартмаççĕ, туса кăларакан продукцин пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешмеççĕ.

Суту-илÿ организацийĕсенчен чылайăшĕ перекетлĕх режимне пурнăçлассишĕн, хуçасăрлăх пирки пулакан тăкаксене пĕтерессишĕн тата тавар çаврăнăшĕнче пулакан расходсене чакармалли заданисене пурнăçлассишĕн кĕрешесси çине тимлĕ пăхмаççĕ. Çак сăлтавсене пула РСФСР Суту-илÿ министерствин организацийĕсем иртнĕ çулта накоплени тумалли плана 358,8 миллион тенкĕ чухлĕ тултарайман, Государство бюджетне усламран 162,5 миллион тенкĕ парса татман.

РСФСР Суту-илÿ министерствин тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен суту-илÿ организацийĕсенчи çитменлĕхсене пĕтермелле, тавар çаврăнăш планне тултарас тата государство бюджечĕ умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе суту-илÿ организацийĕсен руководителĕсенчен çирĕпрех ыйтмалла.

Партипе Правительство халăх валли кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерме пур майсемпе те тăрăшаççĕ. СССР Правительстви кăçал куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли задание 32 миллиард тенкĕ чухлĕ ÿстерсе çирĕплетрĕ. Çак таварсене туса кăларас ĕçре РСФСР-ти вырăнти тата кооперации промышленноçĕ чылай пысăк вырăн йышăнать. Правительствăн заданине пурнăçлама республика промышленноçĕн пур майсем те пур. Резервсемпе кăна туллин усă курас пулать.

Кунпа пĕрлех çакăн çинчен калас пулать: уйрăм районсенче вырăнти чĕртавартан таварсем туса кăларасси, вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Çакна пула, сăмахран, Челябинск облаçĕнче иртнĕ çулта 38 районти тата хулари промкомбинатран 17 комбинат производство программине пурнăçламан, халăх вара тĕрлĕ таварсем 4,6 миллион тенкĕлĕх сахалтарах илнĕ. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 16 комбинат плана тултарман. Иркутск облаçĕнче те ĕçсем кунтан лайăхах мар. Кăçалхи иккĕмĕш кварталта асăннă облаçра промысла кооперацийĕн 150 артелĕнчен 46 артель производство планне тултарман.

Чылай районсенче ĕçсыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. 1952 çулта Молотов облаçĕнче сĕтел-пукан, атă-пушмак, тумтир юсамалли плана тултарман. Иваново, Тюмень облаçĕсенче, Пушкăрт АССР-ĕнче ĕçсыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсен шучĕ промысла кооперации енĕпе ÿсес вырăнне чакнă.

Куллен кирлĕ япаласем тунас тĕлĕшпе халăх ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерес тата бюджета тупăш енĕпе пурнăçламалла тăвас тесе, вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕ пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассине ÿстермелле тата халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисене ытларах пулăшмалла.

Депутат юлташсем! Министерствăсен, ведомствăсен тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен задачи тупăшсене вăхăтра тата пĕтĕмпех пуçа çитермелле тăвасси çеç пулмасть. Парти çапла вĕрентет: пирĕн пухăннă укçа-тенке пĕлсе, тĕрĕс, усăллă расходламалла, халăх пурлăхĕ пĕр пуслăх та сая кайни ан пултăр.

Маларах калаиничен çакă курăнать: республикăн государство бюджетĕнчи укçа-тенкĕн пысăк пайĕ социально-культурăлла ĕçсем тунă çĕре каять. Çавăнпа ку укçа-тенкĕпе уйрăмах пĕлсе, тĕрĕс усă курмалла тăвас пулать.

Сутĕç пайĕсемпе сывлăх пайĕсем тĕрĕслесе тăманнине пула сутĕç тата халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен хăшпĕр учрежденисенче государство укçа-тенкине тĕрĕс мар расходлаççĕ, хăшпĕр чухне вăрăсене тухса укçа пĕтереççĕ. 1952 çулта финанс органĕсем сутĕç учрежденийĕсенче 39 миллион тенкĕ, халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисенче 36 миллион тенкĕ тĕрĕс мар пĕтернине палăртнă.

РСФСР Сутĕç министерствипе РСФСР Сывлăх министерствин тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсен бюджетран уйăрса паракан укçа-тенкĕпе тĕрĕс тата перекетлĕ усă курмалла тăвас пулать.

Финанс дисциплинине пăснине тата укçа-тенке вырăнсăр пĕтернине хирĕç кĕрешессине государство управленийĕн органĕсенче пур майсемпе те вăйлатмалла. Республикăра перекетлĕх режимне пурнăçламан учрежденисемпе предприятисен руководителĕсем те пур-ха. Сăмахран, çăмăл тата апат-çимĕç промышленность предприятийĕсенче финанс дисциплинине нумай пăсаççĕ. Пĕлтĕр хăшпĕр предприятисен цехĕсенче администрацие управлени енĕпе ĕçлекенсем штатпа палăртнинчен нумай ытларах пулнă. Вĕсене тытса тăма государство укçи-тенкине тĕрĕс мар пĕтернĕ. 1952 çулта çăмăл тата апат-çимĕç промышленность предприятийĕсем сметăран ирттерсе 6,6 миллион тенкĕ пĕтернĕ.

Штатра палăртнинчен ытлашши работниксем тытнă, сметăран ирттерсе укçа-тенкĕ расходланă, дисциплинăна штат енĕпе тата смета енĕпе урăх майпа та пăснă тĕслĕхсем хăшпĕр крайсемпе облаçсенчи, сăмахран, Горький облаçĕпе Калуга облаçĕнчи бюджетран укçа-тенкĕ илсе тăракан учрежденисемпе хуçалăх организацисенче те пулнă.

Перекетлĕх режимне çирĕп тытса пырасси министерствăсемпе ведомствăсене тата вырăнти Советсен исполнительнăй комитечĕсене хăйсене пăхăнса тăракан ведомствăсене финанс тĕлĕшĕнчен ытларах тĕрĕслесе тăма хушать. Ведомствăсем енĕпе тĕрĕслес ĕçри пысăк çитменлĕх ревизисене япăх ирттерни пулать. Çакăн пек тĕслĕхсем сахал мар пулаççĕ: ведомствăсенчи ревизорсем хăйсем тĕрĕсленĕ учрежденисем йĕркеллĕ ĕçленĕ тесе палăртаççĕ, Финанс министерствипе Государство контроль министерстви енĕпе тепĕр хут тĕрĕслесен, çав учрежденисенче финанс дисциплинине пăсни курăнать.

Хуçалăх планĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешес, шалти резервсене мобилизацилес, перекетлĕх режимне пурнăçлас ĕçре финанс органĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна палăртас пулать: республикăри финанс органĕсем хăйсем умне кăларса тăратнă задачăсене çителĕксĕр пурнăçлаççĕ.

Хăшпĕр финанс органĕсем предприятисемпе отраслĕсен экономикине япăх тĕпчеççĕ, вĕсен ĕçне сахал тĕрĕслеççĕ, бухгалтери отчечĕсемпе балансĕсене кирлĕ пек тишкĕрмеççĕ. Çавăн пек финанс органĕсен шутне Великие Луки тата Ульяновск облаçĕсенчи финанс пайĕсемпе Мари АССР-ĕн Финанс министерстви кĕреççĕ, Асăннă финанс органĕсем 1952 çулхи отчетсене пăхса тухнă чухне вырăнти хуçалăх организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртман.

Финанс органĕсен хуçалăх планĕсене тултарнине, перекетлĕх режимне пурнăçланине, çавăн пекех предприятисемпе организацисем пурте хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене пĕтĕмпех тата вăхăтра пурнăçласа пынине, государство укçи-тенкине тĕрĕс расходланине тĕрĕслесе тăрас ĕçе вăйлатмалла.

Депутат юлташсем! Сире каласа панă государство бюджечĕ РСФСР-ти халăхсен пурнăçри интересĕсене пĕтĕмпех тивĕçтерет.

Бюджета пурнăçлас тесен республикăри государство аппарачĕн, предприятисен, хуçалăх организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалла, резервсене мобилизацилемелле, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те перекетлĕх режимне çирĕп пăхăнмалла.

РСФСР-ăн государство бюджетне йăнăçлă тултарни Коммунистсен партийĕпе Совет Союзĕн правительстви халăх пурнăçĕн шайне малалла хăпартас тĕлĕшпе промышленноçпа ялхуçалăхне аталантарас енĕпе кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама пулăшĕ.

Пĕр иккĕленмелли те çук, сĕршыври рабочисем, хресченсем, интеллигенци çав задачăсене чыслăн пурнăçлĕç, партипе правительство ертсе пынипе социализмла Тăван çĕршыври мĕнпур халăхсен пурнăçне малалла хăвăрт лайăхлатса пырĕç! (Нумайччен алă çупаççĕ).

Малта пыракан колхозсенчен пример илсе, пур колхозсем те çак кунсенчех государствăна тырă парса татмалла тăвассишĕн кĕрешер!

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ АВГУСТĂН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырпул пухса кĕртнĕ	Комбайнсемпе вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă
Чурачăк	97	69	94	43
Советски	96	54	80	34
Красноармейски	96	56	78	39
Муркаш	96	67	74	35
Елчĕк	95	81	69	45
Комсомольски	94	54	70	46
Шăхасан	93	57	73	45
Первомайски	93	54	76	54
Элĕк	93	58	74	37
Чкаловски	91	55	65	48
Калинино	91	68	76	29
Кувакино	91	91	90	89
Йĕпреç	90	90	100	57
Вăрмар	90	54	73	39
Ишлей	90	58	64	46
Сĕнтĕр	89	63	74	47
Шупашкар	89	59	65	41
Çĕрпÿ	89	66	68	43
Етĕрне	89	80	100	65
Вăрнар	89	58	70	40
Хĕрлĕ Чутай	88	94	100	44
Октябрьски	85	61	59	36
Шăмăршă	85	63	68	52
Канаш	84	75	63	42
Çĕмĕрле	84	55	86	49
Тăвай	83	45	52	42
Сĕнтĕрвăрри	82	47	54	37
Куславкка	80	61	49	41
Пăрачкав	76	72	69	77
Улатăр	73	68	100	80

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКМАЛЛИ ПЛАНА АВГУСТĂН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Мĕн пурĕ акнă	Тулă акнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Кувакино	96	118	12
Шăмăршă	94	64	8
Чкаловски	94	43	11
Тăвай	94	100	1
Елчĕк	93	32	1
Канаш	93	104	2
Çĕрпÿ	93	53	8
Йĕпреç	93	81	4
Красноармейски	93	51	10
Калинино	93	57	4
Чурачăк	93	88	14
Шăхасан	92	70	8
Муркаш	92	47	6
Шупашкар	92	55	7
Элĕк	91	49	13
Комсомольски	91	92	9
Ишлей	91	81	8
Сĕнтĕр	91	62	6
Вăрнар	90	72	13
Первомайски	90	104	6
Çĕмĕрле	90	107	4
Октябрьски	89	50	7
Улатăр	88	115	10
Хĕрлĕ Чутай	87	77	15
Советски	87	48	19
Вăрмар	86	48	10
Пăрачкав	83	34	10
Етĕрне	79	20	1
Куславкка	77	66	3
Сĕнтĕрвăрри	75	37	—

Итем çинчи йĕркесĕрлĕхе пĕтермелле

ЕТĔРНЕ. Тимирязев ячĕпе тăракан колхозăн пилĕк итемĕнче те тырă кăшăлĕсем авăн çапма пуçланăранпах лараççĕ.

Осипова весовщица тырă мĕн чухлĕ тухнине каласа пама пултараймасть.

Колхоз председателĕ Сергеев тата МТС-ăн участокри агрономĕ Чернова юлташсем уй-хиртен килекен тырра тĕрĕс, çийĕнчех шута илессине организацилемеççĕ. Комбайнсенчен тухакан тырра итем çине турттараççĕ те висмесĕрех тăкаççĕ. Колхозăн икĕ итемĕ çинче тарасасем çук.

Çапнă тырра итем çинче хăвăртрах тасатса складсене ярас ĕç те колхозра япăх пулса пырать.

Григорьев юлташ ертсе пыракан бригадăра çурхи тулăна комбайнран уйхире тăкса хăварнисем те пулнă. Козлов весовщик тырра склада янă чухне висмесĕр хыççăн накладнойсем çырман.

Çак йĕркесĕрлĕхсем çинчен районти органсен руководителĕсем те пĕлеççĕ. Анчах та çапнă тырра тĕрĕс шута илес енĕпе кирлĕ ĕçе тумаççĕ.

А. ОХАНДЕРОВ, Б. ТИМОФЕЕВ,
Т. ЯРАНДАЙКИН.

Государствăна — тырă

ÇĔРПŸ. Хрущев ячĕпе тăракан ялхуçалăх артель членĕсем кăçал уйри тырпула ĕç планĕнче кăтартнинчен 4—5 кун маларах вырса пĕтерчĕç. Çавăн пекех кĕрхи тырăсене те чи лайăх вăхăтра, агротехника кăтартнă пек, пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç. Колхоз кăçал пурĕ 203 гектар çине кĕртыррисем акнă, 155 гектар çине хĕреслĕ майпа акса хăварнă.

Халĕ пур бригадăсен итемĕсем çинче те хĕрÿллĕ ĕç пырать. Кунĕн-çĕрĕн авăн çапса хатĕрлев пунктне тырă ăсатаççĕ. Кăçал И. Андреев ертсе пыракан уй-хир бригади уйрăмах пысăк çитĕнÿсем тăвать. Бригада иртнĕ çулта кĕрхи тырăсем кашни гектартан 11—12-шер центнер пухса илнĕ пулсан, кăçал вара 21—22-шер центнер пухса илнĕ. И. Андреев, Е. Кузьмин ертсе пыракан бригадăсем уйран кĕлте турттарса пĕтерчĕç.

Авăн çапнă çĕрте электричество вăйĕпе пĕр молотилка, лашапа ĕçлемелли икĕ молотилка тата «МК-1100» молотилка ĕçлеççĕ. Тырă чĕрĕ пулсан типĕтме колхозăн 2 типовăй сушилка пур.

Хатĕрлев пунктне тырă леçнĕ çĕрте колхозăн 3 автомашини ĕçлет. Машинăсем çине тырă тиеме тата пушатма комсомолецсемпе çамрăксенчен бригада организациленĕ, ăна хастарлă комсомолец Рафаил Никифоров ертсе пырать. Бригада государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ТАТА ВĂРЛĂХ ФОНЧĔ ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА МĔНЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
Августăн 25-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă памалли плана тултарнă	Вăрлăх фончĕ хывнă
Шупашкар	95	23
Ишлей	88	25
Етĕрне	85	54
Шăхасан	83	41
Муркаш	82	28
Тăвай	77	30
Пăрачкав	75	36
Кувакино	71	46
Улатăр	70	51
Елчĕк	70	56
Канаш	68	24
Чурачăк	64	46
Вăрмар	62	27
Куславкка	61	14
Калинино	61	20
Йĕпреç	61	33
Красноармейски	60	26
Çĕрпÿ	60	26
Чкаловски	58	32
Комсомольски	57	39
Сĕнтĕрвăрри	57	26
Шăмăршă	55	39
Советски	55	18
Сĕнтĕр	55	38
Хĕрлĕ Чутай	54	19
Çĕмĕрле	52	24
Октябрьски	52	22
Вăрнар	50	30
Элĕк	50	27
Первомайски	48	41

Пĕр уйăх маларах

ИШЛЕЙ, августăн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, районти колхозниксем кăçал государствăна тырă хатĕрлесе памалли плана малтан палăртнинчен пĕр уйăх маларах, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç. Тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçсене кунтан-кун вăйлатса пынипе паянхи куна районти 10 колхоз государствăна тырă парса татрĕç.

Н. ОРЛОВ.
(Хамăр корр.).

* * *

ЧУРАЧĂК. Метикасси ял Советĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз ĕçченĕсем государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхоз августăн 24-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕ.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесе памалли çулталăкри плана та августăн 24-мĕшĕ тĕлне 100 проценчĕпех тултарчĕ.

М. ЛАНДЫШ.

Механизаторсен ĕçри хастарлăхĕ

ПЕРВОМАЙСКИ, августăн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсем, сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмах районти механизаторсене ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕç. Партипе правительство ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшни çине ответлесе, механизаторсем ялхуçалăхĕнче пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. И. Максимов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кĕрхи тырăсем акмалли плана районта чи малтан тултарчĕ. Бригада «Красный флот» колхозра 80 гектар, «Большевик» колхозра 40 гектар кĕрхи çĕртме турĕ, çав вăхăтрах тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçсене те хăвăрт туса пырать.

Механизаторсем пулăшнипе районти нумай колхозсем кĕрхи тырăсене вăхăтра, лайăх акса хăварчĕç. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне районти 23 колхозран 17-шĕ кĕраки планне тултарчĕç. Кĕракинче уйрăмах «Красный флот», «Путь коммунизма», Мичурин ячĕпе, Шверник ячĕпе тăракан, «Путь социализма» колхозсенчи колхозниксемпе механизаторсем лайăх ĕçлерĕç. «Путь социализма» колхозра МТС механизаторĕсем пурĕ 401 гектар тырă акрĕç, вăл шутра 142 гектар çине ыраш, 30 гектар çине кĕрхи тулă трактор сеялкипе ансăр ретлĕ майпа акса хăварнă.

Халĕ трактористсем чылайăшĕ кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлеççĕ. В. Маркиданов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кăçал пурĕ 270 гектар кĕрхи çĕртме сухи тумалла. Паянхи куна бригада «Путь социализма» колхозра 120 гектар сухаланă.

Ф. Смирнов юлташ ертсе пыракан трактор бригадинчи механизаторсем Маленков ячĕпе тăракан пысăк колхозăн уй-хирĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри задание 81 процент пурнăçланă, хальхи вăхăтра тырпула пухса кĕртсе пĕтерессишĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ. И. Васильев тата П. Макаров комбайнерсем «С-4» тата «Коммунар» комбайнсемпе куллен 12—14-шар гектар тырă вырса пуçтараççĕ. «У-2» трактортан волокуша кăкарса, И. Мешков тракторист комбайнсем ĕçленĕ уй-хирте улăм пуçтарать.

Комсомолец Г. Сахаров «ДТ-34» тракторпа ĕçлемелли сезонти задание 88,5 процент тултарнă.

Маленков ячĕпе тăракан колхозăн итемĕ çинче кăнтăрла та, каçхине те хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. «МК-1100» молотилкăпа кунта машинист Малов юлташ ĕçлет. Вăл авăн çапма тытăннăранпа 150 тонна тырă çапнă ĕнтĕ, пултаруллă машинист сменăра 21-шер тонна тырă çапса задание куллен 175 процент тултарать.

А. ТУКМАКОВ.

Молотилка машинисчĕсен ăмăртăвĕ

Авăн çапас ĕçре малта пыракансем
(августăн 20-мĕшĕ тĕлне)

Йышăннă вырăн	Машинистсен хушамачĕсем	МТС-сем	Молотилка марки	Тырă çапнă (тоннăпа)
1.	Д. Вязова	Муркаш	МС-1100	300
2.	Н. Субботин	Хĕрлĕ Чутай	МК-1100	300
3.	В. Наташкин	Чкаловски	МК-1100	300
4.	М. Иванов	Элĕк	МС-1100	270
5.	Н. Петров	Етĕрне	МК-1100	270
6.	Г. Матвеев	Шăхасан	МК-1100	270
7.	П. Нестеров	Сĕнтĕр	МС-1100	240
8.	Ф. Аристархов	Элĕк	МК-1100	238
9.	В. Тарасов	Етĕрне	МК-1100	235
10.	Р. Спиридонов	Канаш	МК-1100	230
11.	И. Сергеев	Советски	МК-1100	229

Ă м ă р т у в ă й ĕ

СОВЕТСКИ. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса ирттереççĕ. Пуринчен малта 6-мĕш уй-хир бригади пырать. Ку бригада августăн 20-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсем акса пĕтерчĕ. Кĕлтесене пĕтĕмпех итем çине турттарса капана хывнă. Бригада членĕсем 4-мĕшпе 5-мĕш бригадăсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту итогĕсене колхозниксене пĕлтерсех тăраççĕ.

Социализмла ăмăртăва хутшăнса, ытти бригадăсенчи колхозниксем те хастарлă ĕçлеççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре МТС пысăк пулăшу пачĕ. Чылай пысăк лаптăк çинчи çуртырине комбайнпа вырнă. Н. Захаров комбайнер талăкра 20—30 гектар тырă вырчĕ.

Колхоз ĕçченĕсен хастарлăхне çĕклеме агитацилле-массăлла ĕçе лайăх туса пыни нумай пулăшать. Агитаторсем СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсене тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сессире каланă сăмаха колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах колхозри парторганизаци секретарĕ В. Тимофеев, коммунист-агитаторсем П. Федоров, С. Гаврилов, В. Прокопьев, Г. Егоров юлташсем пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ.

Колхозра тухса тăракан стена хаçачĕсем çитменлĕхсене сивĕччĕн критиклеççĕ, малта пыракансен ĕç опытне ыттисем хушшинче сарма тăрăшаççĕ. Çакă вăл ĕçре çитĕнÿсем тума май парать.

Н. Крылов комсомолец ертсе пыракан транспорт бригади кулленхи ĕçре хăйĕн хастарлăхне кăтартать. Бригада членĕсем государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма тăрăшаççĕ. Транспорт бригадинче 25 лав тата пĕр автомашина. Колхоз государствăна ыраш парса татрĕ. Халĕ тулă, пăрçа, хуратул леçеççĕ. Государствăна тырă панипе пĕр вăхăтрах, килес çул валли пысăк пахалăхлă вăрлăх хывса хăварас ĕç те хĕрÿллĕн пулса пырать.

Свердлов ячĕпе тăракан колхоз кÿршĕри Шверник ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту итогĕсем кăтартса панă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре Свердлов ячĕпе тăракан колхоз малта пырать.

А. ЛУКИН.

Совет Правительствипе Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ хушшинче пулнă калаçусен итогĕсем çинчен урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

Нумай çĕршывсенчи анлă общественность Совет Правительствипе Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ хушшинче пулнă калаçусен итогĕсене, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков августăн 22-мĕшĕнче каланă сăмаха тулли кăмăлпа ырласа кĕтсе илнĕ. Мускавра калаçусем ирттернипе йышăннă политикăлла тата экономикăлла решенисене нумай хаçатсем питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тесе хаклаççĕ. Çав решенисене вăрçă хыççăнхи тапхăрти чи кăткăс ыйтусенчен пĕрне—Германи проблемине мирлĕн йĕркелес ыйтăва татса парас, нимĕç халăхне мирлĕ аталанмалли тата хăйĕн нациллĕ шухăш-ĕмĕчĕсене пурнăçламалли çул çине çирĕп тăма пулăшас шутпа йышăннă.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи калаçусен результачĕсене нимĕç халăхĕ хытă хавасланса кĕтсе илнĕ. Германири нумай хаçатсем калаçусем çинчен çырнă пур материалсене те пичетленĕ тата çав документсем пирки общественность мĕн калани çинчен нумай çыраççĕ.

«Нейес Дейчланд» хаçат «Мирлĕ, ĕçлесе пурăнакан тата демократиллĕ Германишĕн» ятлă умстатьяра Совет Правительствипе Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ хушшинчи калаçусем Германишĕн мирлĕ пурнăç тата çĕршыв пĕрлĕхне туса хурас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать.

«Калаçусем ирттернĕ хыççăн Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ пĕтĕм нимĕç халăхĕшĕн усăллă пысăк çитĕнӳсем туса таврăнчĕ. Урăх çĕршывсенче калаçусем пулнă хыççăн делегаци çавăн пек пысăк çитĕнӳсемпе таврăнни Германи историйĕнче халиччен пулман-ха,—тесе çырать хаçат. — Туслăн, кăмăллăн тата пĕр-пĕрне ăнланса калаçнă май, пĕтĕм Германие тивекен питĕ пысăк ыйтусем тăрăх пĕтĕмпех калаçса татăлнă. Ку ыйтусем пирĕн халăх пурнăçĕшĕн питĕ кирлĕ ыйтусем пулса тăраççĕ, кунта Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен тата пирĕн тăван çĕршывăн нациллĕ пĕрлĕхне çĕнĕрен туса хурасси çинчен сăмах пырать».

Хаçат малалла çапла çырать: «Гитлерла вăрçă пĕтнĕренпе 8 çул иртнĕ хыççăн та Германин мирлĕ договор çук-ха. Çакăншăн тĕп ответа Аденауэр тытма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вăл миртен тата килĕшӳ тăвассинчен питех те хытă хăрать. Мир тата килĕшӳ туни унăн вăрçă хатĕрлес политики тата унăн халăха хирĕçле режимĕ путланса ларассине пĕлтерет. Çакна Аденауэр пĕлет».

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков каланă сăмахран çак вырăна—«халĕ ыйту çапла тăрать: Германи е Европăра мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетес ĕçре пысăк факторсенчен пĕри пулса тăма, е çĕнĕ агрессин Европăри тĕп вучахĕ пулса тăма пултарать» тенĕ вырăна илсе, хаçат çапла çырать: «Халĕ, нимĕç халăхĕ хăйĕн умĕнче выртакан икĕ çултан хăшĕ ăçта илсе пынине уççăн курнă вăхăтра, килĕшӳ тутарассишĕн тата мирлĕ договор тутарассишĕн кĕрешес ĕçе анлă сарма пур майсемпе те тăрăшас пулать. Çакă вăл—мирпе пĕрлĕхшĕн кĕрешни пирĕн хамăрăн интересемшĕн кăна мар, Европăри мĕнпур халăхсен интересĕсемшĕн те кĕрешнине пĕлтерет».

Нимĕçсен ирĕклĕ профсоюзĕсен «Трибюне» хаçачĕ Совет Союзĕпе Демократиллĕ Германи Республики хушшинчи калаçусем хыççăн пичетленĕ документсене «Совет Правительстви туслă пурăнма тăрăшнине лайăх кăтартакан тĕслĕх» тесе хаклать. «Форвертс» хаçат çав документсене «Германипе Совет Союзĕ хушшинче Мускавра пулнă калаçусен чаплă результачĕсем» текен заголовокпа пичетлет.

Совет Правительстви Германин вăрçă хыççăнхи финанспа экономикăлла обязательствисене çăмăллатма йышăнни пирки Германи халăхĕн мĕнпур сийĕсем те хăйĕн шухăшне каласа параççĕ.

Хĕвеланăç Берлинри «Монтаг-Морген» хаçат: Совет Союзĕпе Польша 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен Демократиллĕ Германи Республикинчен репарацисем илме чарăнаççĕ, совет акционерлă обществисен предприятийĕсене каялла тавăрса параççĕ, вĕсем пĕтĕмпе 2,7 миллиард марка тăраççĕ, оккупаци расхочĕсене чакараççĕ, тесе пĕлтернĕ. Юлашкинчен хаçат СССР Демократиллĕ Германи Республикине çĕнĕрен хушса 590 миллион тенкĕлĕх тавар тăратма тата 485 миллион тенкĕ кивçен укса пама килĕшни çинчен çырнă.

Польша Правительствин заявленийĕнче çапла каланă: ССР Союзĕн Правительстви Германи ыйтăвĕпе йышăннă решенисем «Германи халăхне хăйĕн экономикине тĕреклетме кăна мар, çавăн пекех тата Германие çĕнĕрен пĕр государство—пĕрлештернĕ, демократиллĕ Германи государстви туса хума условисем хатĕрлес ĕçре чылай пысăк пулăшу параççĕ. Польша халăхĕ Германирен çавăн пек государство туса хурассишĕн тăрать».

Милитаризм, агресси тата вăрçă çулĕ Германишĕн наци тĕлĕшĕнчен хăйне валли хăй вилĕм çулĕ хатĕрлени пулнине истори кăтартса пани çинчен хаçатсем уйрăмах нумай çыраççĕ. Халăха çав çул çине Аденауэрăн милитаристла тата реваншистла ушкăнĕ тăратасшăн.

Польшăри «Трибуна люду» хаçат çапла çырать: «Англипе Америка империалисчĕсем, Аденауэр çине таянса, Хĕвеланăç Германие милитаризм, ревизионизм тата реваншизм вучахĕ, Польшăна хирĕç тата Совет Союзне хирĕç кĕрешмелли вырăн, çĕнĕ вăрçă вучахĕ туса хума хытă тăрăшаççĕ. Çав тĕллевпе вĕсем Германи пайланса тăнине çаплипех хăвараççĕ тата Германи пайланса тăнине çирĕплетме хăтланаççĕ».

Совет Союзĕн Германи ыйтăвĕпе тытса пыракан мирлĕ политикине мĕнпур халăхсем хĕруллĕн ырлаççĕ. Чехословакири «Руде право» хаçат «Совет Союзĕ—пĕтĕм нимĕç халăхĕн чи лайăх тусĕ» ятлă умстатьяра çапла çырать: «Мускаври калаçусем туслăн, пĕр-пĕрне лайăх ăнланса илнипе пулса иртнĕ. Калаçу итогĕсем вĕсем историри паллă событи пулса тăраççĕ. Демократиллĕ Германи Республикине пур енчен те пулăшса пырса, Совет Союзĕ пĕтĕм Германири мире юратакан вăйсен тĕрекне çирĕплетет».

Болгарири «Отечествен фронт» хаçат «Европăри тата пĕтĕм тĕнчери мир интересĕсемшĕн» ятлă умстатьяра çапла çырать:

«Германин нациллĕ пĕрлĕхне çĕнĕрен туса хурас тата демократиллĕ, мире юратакан государство туса хурас ĕçре Демократиллĕ Германи Республики историллĕ вырăн йышăнса тăмалла. Мускаври калаçусен результачĕсем Демократиллĕ Германи Республикине тата ытларах тĕреклетеççĕ, унти халăхăн пурнăçне лайăхлатма пулăшаççĕ, çав халăх Германи пĕрлĕхне хытă хӳтĕлесе тăрĕ».

Мускаври калаçусем вăхăтĕнче йышăннă решенисене Германи милитаризмĕнчен инкек курнă халăхсем мирпе хăрушсăрлăха хӳтĕлемелли шанчăк тесе шутлаççĕ.

Чехословакири «Руде право» хаçат çапла çырать: «Совет Правительстви тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса тунă çĕнтерӳ, Германипе хăвăртрах мирлĕ договор тутарас тĕлĕшпе тăрăшса тунă çĕнтерӳ, пирĕн республикăн чиккисене никам тапăнмалла мар йĕрке туса хума пулăшнине пирĕн халăх лайăх пĕлет. Çакă вара пирĕн çĕршывра социализм тăвас ĕçшĕн хăрушсăрлăх тата пирĕн хĕвеланăçĕнчи чикĕсемшĕн хăрушсăрлăх туса хунине пĕлтерĕччĕ. Çавăнпа та Мускаври калаçусен результачĕсем пĕтĕмпех пирĕн халăхăн шухăш-ĕмĕчĕсемпе килĕшсе тăраççĕ».

Венгрири «Сабад неп» хаçат калаçусен итогĕсем çинчен çырнă умстатьяна «Мирлĕ пурнăç тумалли çĕнтерӳллĕ çул» тесе ят панă. Хаçат «Мускаври калаçусем вăхăтĕнче тунă килĕшӳсем, Совет Союзĕ Демократиллĕ Германи Республикине ăшă кăмăлпа пулăшни—çаксем пурте Германие мирпе демократи тата нациллĕ пĕрлĕхĕн çулĕ çине тăма пулăшас тĕлĕшпе тунă ĕçсем» пулнине палăртать.

Иртнĕ вăрçăра хăйсене парăнтарнăшăн тавăрма тăрăшакансем Хĕвеланăç Германире, Аденауэр пуç пулса ертсе пынипе, ирсĕр ĕçсем туни çинчен аса илтерсе, «Юманите» хаçат çапла çырать: «Çавăн пек условисенче Совет Правительстви хăйне çирĕп тытать, нимĕç халăхне пулăшать. Франци правительстви хамăр çĕршывăн интересĕсемшĕн мĕн чухлĕ те пулин тăрăшать пулсан, унăн çавăн пек тумалла та ĕнтĕ...

Пирĕн çĕршыва Атлантика блокне пăхăнтарни, Германин фашистла çарне хĕçпăшаллантарни тата Германи пайланса тăнине çаплипех хăварни хăрушлăха ӳстереççĕ, Германи çĕнĕ агрессин Европăри тĕп вучахĕ пулмалли çул çине тăрас хăрушлăха ӳстереççĕ. Аденауэр хĕреслĕ поход тума ĕмĕтленет пулсан, Бонрипе Парижри договорсем французсене çав похода хутшăнтарасси патне илсе пыма пултараççĕ. ССР Союзĕн сĕнĕвĕсене йышăнни вара мирлĕ пурнăçăн çĕнĕ самани пуçланни пулĕччĕ».

Китайри «Гунженьжибао» хаçат «Германи ыйтăвне мирлĕн йĕркелеме пулăшакан пысăк ĕçсем» ятлă статьяра Мускавра иртнĕ калаçусем Европăра миршĕн тата совет халăхĕпе нимĕç халăхĕ хушшинчи туслăха малалла аталантарас ĕçшĕн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртать.

«Германи ыйтăвне татса пани тата Германире милитаризм çĕнĕрен çĕкленессине чарса лартни,—тесе çырать хаçат, — Германипе Европăри мĕнпур çĕршывсен халăхĕсен ĕмĕчĕ пулса тăрать. Германи ыйтăвне Европăра тата пĕтĕм тĕнчере хăрушсăрлăх туса хурассипе çыхăнтарса, мире юратакан халăхсем çĕнĕ вăрçă пуçлама парас мар тесе ăнăçлă кĕрешеççĕ, вĕсем Германипе мирлĕ договор тума тата пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ тата мире юратакан Германи туса хума ыйтаççĕ».

Буржуалла хаçатсем, сăмахран, Хĕвеланăç Германири влаçра тăракансен хаçачĕсем, калаçусен итогĕсене анлă общественноçран пытарса тăма хăтланаççĕ. Буржуалла хаçатсем калаçусен итогĕн чăнчĕн шухăшне пăсма хăтланаççĕ, çав итогсем Германи ыйтăвне мирлĕн тата демократиллĕ йĕркепе татса парас ĕçре, Европăри тата пĕтĕм тĕнчери мир ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине пĕлтересшĕн мар. Общественноçа ултала хытă тăрăшса, Атлантика блокĕнчи çĕршывсен реакциллĕ хаçачĕсем Мускаври калаçусем вăхăтĕнче йышăннă решенисене пропаганда тĕллевĕпе кăна йышăннă пек кăтартма хăтланаççĕ. Сăмахран, çав решенисене Хĕвеланăç Германири суйлав результачĕсем çине влияни парас тĕллевпе кăна йышăннă пек кăтартма хăтланаççĕ.

Анчах буржуалла хаçатсем хĕвеланăçĕнчи державăсен Германи ыйтăвĕ тĕлĕшпе позицисем начар пулнине пытарса тăма пултараймаççĕ.

Г. М. Маленков августăн 22-мĕшĕнче каланă сăмах пирки Нью-Йоркри «Уолл-стрит джорнэл» хаçат редакци çырнă статьяна пичетленĕ. Унта вăл çапла çырать: «Германишĕн пыракан кĕрешӳвĕн пĕлтерĕшне Маленков питĕ лайăх кăтартса пачĕ, çав пĕлтерĕше унтан лайăхрах кăтартса пама май та çук пулĕ... Эпир татăклă мар тата иккĕленекен политика тытса пыратпăр, çав политикăна хирĕç калама Маленков уççăнах палăрса тăракан сăлтава тупрĕ».

Совет правительстви Демократиллĕ Германи Республикине пĕр тӳлевсĕрех 33 предприяти пама, унтан репарацисем илме пăрахма йышăннине палăртса, хаçат çав решенисене—Демократиллĕ Германи Республикин халăх хуçалăхне малалла аталантарма тата унăн халăхĕн пурнăçне лайăхлатма пулăшакан решенисене—хак парасран пăрăнать.

Империалистсен пропаганди Совет Союзĕ çинчен вăл «агрессиллĕ» çĕршыв тесе яланах элеклет пулсан, хаçат та çавăн пекех калать. Анчах, çав вăхăтрах, хаçат США Германие тата ытларах пайлас политика тытса пынине йышăнмасăр тăма пултараймасть. Хаçат çапла çырать:

«Германи ыйтăвĕ тĕлĕшпе эпир тытса пыракан политикăн пĕр питĕ хавшак вырăнĕнчен çапса, Кремль чее хăтланать. Пирĕн политика Германие пайланипех хăварас шухăш çинче никĕсленсе тăни уççăнах паллă. Эпир халиччен пур ĕçсене те çав шухăша пурнăçлас шутпа турăмăр, малашнехи ĕçсене те çав тĕллевпе туса пыма хатĕрленетпĕр. Официальнăй заявленисенче эпир Германи хăçан та пулин пĕрлешессине шанса тăни çинчен пĕлтеретпĕр, анчах чăннипе эпир çавна хирĕçле ĕçсем тăватпăр, çакна нимĕçсем хăйсем те пĕлеççĕ. Шăпах та нимĕçсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ çав сăлтава вырăссем пире хирĕç кăларса тăратрĕç».

Мускавра тунă килĕшӳве нимĕç халăхĕн анлă сийĕсем тата урăх çĕршывсенчи малта пыракан общественность ырланине буржуалла хаçатсен ирĕксĕрех йышăнма тивет. Асăннă килĕшӳсем Германи ыйтăвне татса пама пулăшнине вĕсем ирĕксĕрех йышăнаççĕ.

ССР Союзĕпе Демократиллĕ Германи Республики хушшинчи калаçусен итогĕсен пĕлтерĕшне хак парса, Хĕвеланăç Германири «Франкфуртер рундшау» хаçат августăн 24-мĕшĕнче «Хĕвеланăçпе Хĕвелтухăç хушшинче калаçусем пуçланас вăхăт çитет», тесе çырнă. «Вестдейче нейе прессе» хаçат та çавăн пек требовани кăларса тăратнă. Кам çавăн пек калаçусем ирттерме питех те кирлине йышăнмасть, тет хаçат, «çав çынна, ку ĕç çине шанмасăр пăхасси унăн тĕллевĕ пулса тăрать тесе, айăплама пулать пулĕ, ăна çавăн пек айăплама сăлтав пур».

Совет правительствипе Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ хушшинче Мускавра пулнă калаçусем вăхăтĕнче тунă килĕшӳ пирки Америкăри влаçра тăракан ушкăнсем аптраса ӳкнĕ. Çакă вăл Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернинчен курăнать. Германин финанспа экономика тĕлĕшĕнчи обязательствисене çăмăллатакан решенисем пирки Америкăри влаçра тăракан ушкăнсем хăйсен шухăшне каласа пама килĕшмеççĕ.

«Америкăри официальнăй çынсен шучĕпе,—тесе çырать корреспондент.—çав килĕшӳве тума Хĕвеланăç Германире суйлав пулас умĕнхи вăхăта суйласа илнĕ, çав килĕшӳве туни вăл Хĕвеланăç Германири суйлав результачĕсене вĕсемшĕн усăллă пулмалла тăвас тĕлĕшпе пуçарнă çĕнĕ кампани пулса тăрать».

Англири хаçатсем Совет Союзĕпе Демократиллĕ Германи Республики хушшинчи калаçусен итогĕсене анлă сутатаççĕ. Буржуалла хаçатсем Мускаври решенисене Хĕвеланăç Германире çывăх вăхăтра пулмалли суйлавра Аденауэра намăслантарас шутпа тунă маневр пек çеç кăтартма хăтланаççĕ. Анчах çав сăмахсене юриех шухăшласа кăларнине хаçатсем хăйсемех тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Çапла, «Таймс» хаçатăн дипломати ĕçĕсене сутатакан обозревателĕ, Мускаври калаçусен итогĕсем çинчен усал сăмахсем çырса тултарса, ирĕксĕрех çапла калать: «Çак килĕшӳрен Хĕвелтухăç Германи сахал мар усă илессине пытарса тăма çук».

«Нью-кроникл» хаçатăн дипломати ĕçĕсене сутатакан обозревателĕ Бартлетт та «Таймс» корреспонденчĕ пекех калать. Мускавра çырса алă пуснă протоколта экономикăпа финанс енĕпе тума йышăннă ĕçсем Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх пурнăçне лайăхлатма пулăшасси çинчен Бартлетт та çырать.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат хăйĕн Мускаври корреспонденчĕ Даунтон пĕлтернине пичетлесе кăларнă. «Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсен Мускаври дипломачĕсем çак утăм Хĕвеланăç Германири анлă массăсене тарăн шухăша яра́ссине, вĕсен шухăшне урăхлатассине хак памасăр тăма çуккине палăртаççĕ», тесе çырать вăл.

Атлантика блокĕн политики хĕвеланăçĕнчи державăсене йывăрлăха кĕртсе ӳкерет. Буржуалла хăшпĕр хаçатсем çак йывăрлăхран тухмалли çула тупма хăтланаççĕ. «Йоркшир пост» хаçатăн политикăлла ĕçсене сутатакан обозревателĕ, Совет Союзĕпе Германи пĕлтернине хĕвеланăçĕнчи çĕршывсен столицисенче тĕплĕн вĕренни çинчен пĕлтерсе, çапла çырать: «Совет Союзĕ нумай пулмасть панă нотăсене хирĕç ответлес тĕллевпе хĕвеланăçĕнчи державăсем хатĕрленĕ çĕнĕ сĕнӳсене çак эрне вĕçĕнче пулнă событисене шута илсе тепĕр хут тĕпчесе вĕренес пулать». (ТАСС).

Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати пĕлтерни

БЕРЛИН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх палатин [illegible] ларăвĕнче палата пĕлтерние йышăннă. Унта çапла каланă:

«Премьер-Министр Отто Гротеволь тата СССР Правительстви чĕннипе 1953 çулхи августăн 20—22-мĕшĕсенче Мускавра пулнă Правительство делегацийĕн ытти членĕсем тунă доклада Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати пысăк савăнăçпа тата кăмăлласа кĕтсе илчĕ. Унта Демократиллĕ Германи Республикине экономика енĕпе пысăк пулăшу парасси çинчен СССР Правительствипе килĕшӳ тунă, Совет Союзĕпе Демократиллĕ Германи Республики хушшинчи çыхăнусене вăйлатасси çинчен тата пĕтĕм Германи ыйтăвĕсем тăрăх калаçусем ирттернĕ.

Германи нацийĕн тĕп ыйтăвĕсем тĕлĕшпе СССР Правительствипе Демократиллĕ Германи Республики правительстви пĕр шухăш-кăмăллă пулнине Халăх палати тепĕр хут пысăк хавхаланупа палăртать. Германи нацийĕ Германи пайланса тăнине пĕтересшĕн тăрать. Вăл пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ, мире юратакан Германи туса хурасшăн тата çавăн пек Германипе мирлĕ договор тутарасшăн тăрать. Çак тĕллевпе çывăх вăхăтрах мирлĕ конференци пухмалла, мирлĕ договор тăвас ĕçре пур тапхăрсене те тата мирлĕ конференцие те Германи представителĕсене хутшăнтармалла. Нимĕçсем хушшинче килĕшӳ тунипе Пĕтĕм Германин Вăхăтлăх правительствине туса хумалла. Çав Вăхăтлăх правительствăн тĕп задачисенчен пĕри вăл пĕтĕм Германире ирĕклĕ суйлава хатĕрлесе ирттересси пулать. Çав суйлава пула, пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ мире юратакан Германин государствăлла, обществăлла тата экономикăлла тытăмĕ тĕлĕшĕнчи ыйтăвне пирĕн халăх хăех, ют çĕршывсем хутшăнмасăрах, татса парать. Çак ыйтăва татса парас ĕçе капиталистла шултра монополисене (картельсене т. ыт. те) хутшăнтармалла мар.

Çакă вăл Германи халăхĕн ирĕкĕ пулать. Германи халăхĕ тĕрĕслĕхлĕ мир тăвасшăн, хăйĕн пĕрлĕхĕпе ирĕкне туса хурасшăн.

Аденауэрăн реваншистла политики вара çавна хирĕç пырать, вăл Бонра тата Парижра алă пуснă договорсем пулăшнипе Хĕвеланăç Германие агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика пактне хутшăнтарасшăн. Аденауэр политики Хĕвеланăç Германие çĕнĕ йывăрлăхсем кӳрет, вăл Хĕвеланăç Германирен Америка протекторачĕ туса хурать, çĕнĕрен фашистла-милитаристла диктатура туса хурса, вăрçăн çĕнĕ вучахне туса хума тĕллев тытать.

СССР Правительстви августăн 15-мĕшĕнче панă нота, çавăн пекех Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ ирттернĕ калаçусен результачĕсем Германие, уйрăмах, Демократиллĕ Германи Республикине, пысăк пулăшу параççĕ. Ку вăл, уйрăммăн илсен, çак фактсенчен курăнать:

а) 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Демократиллĕ Германи Республикинчен репараци илме чарăнмалла тунă;

б) Совет Союзĕн акционерла обществисен 33 предприятине нимĕн тӳлевсĕрех каялла панă, вĕсем репараци шучĕпе СССР харпăрлăхне куçнă пулнă;

в) вăрçă хыççăн оккупаци расхочĕсем тĕлĕшпе государство енĕпе Совет Союзне тӳлемелли парăмран Германие хăтарнă;

г) оккупаци расхочĕсене чакарма, çав расходсене Демократиллĕ Германи Республикин, çавăн пекех Хĕвеланăç Германири федеральнăй республика бюджетĕнче 5 процентран ытла мар тума сĕннĕ, çак сĕнĕве Демократиллĕ Германи Республики тĕлĕшпе 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пурнăçлама тытăнаççĕ;

д) апат-çимĕç продукчĕсемпе чĕртавар çĕнĕрен хушса нумай панă.

Политикăпа экономика енĕпе çакăн пек пысăк пулăшу пани пирĕн халăха хăйĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн тата миршĕн кĕрешессине чылай вăйлатма хушать.

СССР Правительствин çак сĕнĕвĕсемпе решенийĕсене 1952 çулхи мартăн 10-мĕшĕнче панă нотăра тата халĕ Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен тепĕр хут панă сĕнӳсене çирĕплетнĕ.

Çав сĕнӳсем пирĕн пĕтĕм нимĕç халăхĕн нациллĕ интересĕсене тивĕçтереççĕ.

Гитлерла вăрçă вăхăтĕнче айăплă ĕçсем тунăшăн наказани памалла тунă нимĕç çар çыннисене ирĕке кăларасси çинчен Мускавра килĕшӳ туни те çавăн пекех пĕтĕм Германишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ку шута мирпе этемлĕхе хирĕç уйрăмах йывăр ĕçсем тунă çынсем кĕмеççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати пулăшу панăшăн Совет Правительствине чĕререн хĕруллĕн тав тăвать, çав пулăшăва пама хатĕр тăнине Совет Союзĕн Правительстви пĕтĕм Германие кăтартса пачĕ. Халăх палати тата Польша Халăх Республикин правительствине чĕререн тав тăвать, вăл Германие ӳлĕмрен Польшăна репараци укçи тӳлессинчен хăтарчĕ. Халăх палати çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери мир лагерĕнчи ытти мĕнпур çĕршывсене те Демократиллĕ Германи Республикине халĕ таварсем çĕнĕрен хушса панăшăн тав тăвать.

Мускаври килĕшӳсем тепĕр хут çакна кăтартса параççĕ: СССР Правительстви хăйĕн мирлĕ политикине, аслă политикăна, тата Германи тĕлĕшпе Германин мире юратакан тата демократиллĕ вăйĕсене шанса тăракан хăйĕн политикине çирĕппĕн пурнăçласа пырать. Совет Союзĕн тулашри политикин çав принципĕсемех Демократиллĕ Германи Республикин халăх хуçалăхне пысăк пулăшу панинчен те курăнаççĕ. Çав пулăшу вăл Демократиллĕ Германи Республикине таварсем нумай тата кивçен укса панинче палăрса тăрать. Çавна май халăхăн пурнăç шайне малалла чылай лайăхлатма пулать. Кашни нимĕç çакна курса тăрать: Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тытса пыракан политика — «Совет Союзĕпе тата пĕтĕм тĕнчери мир лагерĕнчи ытти çĕршывсемпе туслă пурăнмалли политика, пĕртанлăхпа туслăх никĕсĕ çинче Германин мĕнпур кӳршисемпе тата тĕнчери мĕнпур халăхсемпе туслă çыхăнусем тытса пымалли политика, мирлĕ строительство политики тата халăхăн экономикăлла пурнăçне лайăхлатмалли политика — пĕтĕм нимĕç халăхĕшĕн усăллă. Пачах урăхла, Аденауэр политики Гитлер политикине малалла тытса пыни пулать, çав политика Германие çĕнĕ питĕ хăрушă катастрофăна кĕртсе ӳкерессипе хăратса тăрать. Çавăнпа та халĕ Хĕвеланăç Германи çак задача умĕнче тăрать: сентябрĕн 6-мĕшĕнче пулакан суйлавра Аденауэра сирпĕтсе антармалла, унăн политикине сирсе ямалла, мирлĕ тата демократиллĕ майпа Германие пĕрлештерес тата Германипе хăвăртрах мирлĕ договор тăвас тĕлĕшĕнчен пур ыйтусемпе те пĕтĕм Германире килĕшӳ тумалла.

Халăх палатин делегацийĕ 1952 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче Бонри парламента сĕнӳ пачĕ, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати тата тепĕр хут хăй Хĕвеланăç Германири федеральнăй республикăн парламенчĕпе пĕрле Пĕтĕм Германин Вăхăтлăх правительствине туса хума хатĕр тăни çинчен пĕлтерет. Çав вăхăтлăх правительство пĕтĕм Германире ирĕклĕ суйлав ирттерме пĕр тăхтаса тăмасăр хатĕрленме тивĕç.

Çак çул кăна вăл пирĕн халăха ĕлĕкхи пек пысăк йăнăшсем тăвассинчен, юнпа куççуль юхтарассинчен хăтарма, çĕнĕ хăрушă йăнăшсенчен хăтарма тата телейлĕ малашлăх патне илсе пыма пултарать. Çавăнпа та эпир, пирĕн нумай асап тӳснĕ халăх халех ĕнтĕ, юлашкинчен, пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, мире юратакан, демократиллĕ Германи туса хурасси патне тата мирлĕ договор тăвасси патне илсе пыракан çул çине тăтăр тесе, Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕнчи мĕнпур нимĕçсене пĕтĕм вăйпа кĕрешме чĕнетпĕр.

Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати.

Берлин, 1953 çулхи августăн 26-мĕшĕ.

Корейăри çутĕç работникĕсен канашлăвĕ

ПХЕНЬЯН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Пхеньянра Пĕтĕм Корейăри çутĕç работникĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура шкулсенче, техникумсенче, аслă шкулсенче вĕрентекен преподавательсем, ача çурчĕсенче ĕçлекен воспитательсем пулнă. Халăха вĕрентес енĕпе отечественнăй вăрçă тапхăрĕнче туса ирттернĕ ĕçсен итогĕсем çинчен тата çутĕç работникĕсем умĕнче вăрçă хыççăнхи тапхăрта тăракан задачăсем çинчен çутĕç министрĕ Пэк Нам Ун доклад тунă.

Японире Китайпа суту-илӳ тăвассине вăйлатма ыйтаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Биснес уик» журнал çырнă тăрăх, «халĕхи вăхăтра японецсем пурте: континентпа ĕçлĕ çыхăнусем тытни Японин умне экономика тĕлĕшпе тухса тăнă йывăрлăхсене сирсе ямалли май пулать, тесе шутлаççĕ.

Америка политикине палăртса тăракан çынсемшĕн ку вăл хăвăрт начарланса пыракан йывăр ĕçсем çинчен тата тепĕр хут аса илтерни пулса тăрать. Японире американецсене хирĕçле шухăш ӳссе пырать. Эпир Японие коммунистла Китайпа суту-илӳ тума чарма тăрăшни суран çине тăвар сапни кăна пулать пулмалла».

Японире Китайпа суту-илӳ тăвассишĕн тăракан шухăш «юр чăмакки пек ӳссе пыни çинчен» каласа, «Биснес уик» çапла çырать: «Темиçе уйăх каялла Америка çар заказĕнчен услам илсе тăнă вак предпринимательсем халĕ, çак заказсем сахалланнă хыççăн, Китайпа суту-илӳ тăвассине вăйлатассишĕн пыракан юхăм пуçĕнче тăраççĕ. Корейăра вăрçă ĕçĕсем чарăннă май вĕсем çумне пысăк хуçасем пĕрлешме васкаççĕ. Паллă промышленниксем Китайран пыракан çынсене апата чĕнеççĕ, вĕсемпе Китай малашлăхĕ çинчен калаçаççĕ, çыхăну туса хураççĕ.

Китайпа Япони хушшинче суту-илӳ ĕçне вăйлатма пулăшакан ушкăнсем пĕр вăхăтра сӳнсе ларма пуçланăччĕ. Халĕ вĕсем паллă организацисем пулса тăраççĕ. Вĕсем куллен ĕçлĕхлĕ нумай сĕнӳсем илеççĕ. Японипе Китай хушшинчи суту-илĕве пулăшас тĕлĕшпе ĕçлесе тăнă парламент лигинче нумаях та пулмасть парламент членĕсем питĕ сахал пулнă. Халĕ вăл 300 çынна пĕрлештерсе тăрать. Хаçатсем те калаçма пуçларĕç. Пысăк хаçатсем, суту-илĕве вăйлатма ыйтса, редакци çырнă статьясене пичетлеççĕ».

Юлашки почтăран

Кая юлса тухакан хаçат

Районти хаçатсем эрнере икĕ хут — вырсарникун тата кĕçнерникун тухса тăраççĕ. Анчах Куславкка районĕнчи «Ленин ялавĕ» хаçат редакцийĕ çак йĕркене пăхăнса ĕçлемест. Юлашки уйăхра кунта çапла пулса пырать: вырсарникунхи номер кĕçнерникун тин вулакансем патне саланать, кĕçнерникунхи вара вырсарникун тухать. Августăн 9-мĕшĕнчи номере пĕтĕмпе пекех ТАСС панă материалсемпе тултарнă. Редакци хатĕрлени умстатьяпа виçĕ заметка кăна. Апла пулин те редактор С. Ефимов юлташ çак номере вăхăтра кăларайман. Вырăсла кăларăмĕ вулакансем патне августăн 11-мĕшĕнче, чăвашла кăларăмĕ вара августăн 12-мĕшĕнче тин саланчĕ. Районти хаçата вулакансем СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕ усăлни çинчен сесси хупăннă хыççăн темиçе кунтан тин пĕлме пултарчĕç.

Юлашки 68-мĕш номер та кая юлса тухрĕ. Ку номера—вырăслине те, чăвашлине те—районти почта уйрăмне 4 кун иртсен леçсе пачĕç. Почта валеçме тепĕр пĕр-икĕ кун иртнине шута илсен, вулакансем хăйсен район хаçатне эрнене яхăн кая юлса илеççĕ. Çавăнпа та вĕсем центральнăй хаçатсенче Демократиллĕ Германи Республикин делегацийĕ Берлина таврăнни çинчен вуласа пĕлнипе пĕр вăхăтра район хаçатĕнче çав делегаци Мускава килсе çитни çинчен кăна вулама пултарнинчен тĕлĕнмелли нимĕн те çук. Совет Союзĕнче водородлă бомбăна сăнаса пăхни çинчен пĕлтернине те хаçат радиоран пĕр эрне кая юлса пĕлтерчĕ.

Паян—августăн 28-мĕшĕнче — вулакансем аллинче район хаçачĕн черетлĕ номерĕ пулмалла. Анчах С. Ефимов редактор çĕнĕ номере хатĕрлесе çитермен-ха.

Хаклă парне

КАНАШ. Депори паллă машинист СССР Верховнăй Совет депутачĕ Павел Назарович Назаров иртнĕ уйăхра йывăр тиенĕ составсем илсе çӳремелли задание 200 процент, çĕр кăмрăкĕ перекетлемелли плана 250 процент пурнăçланă. СССР Çул-йĕр Министерстви П. Н. Назаров юлташа лайăх ĕçленĕшĕн хăй ятне çырнă ылтăн сехет парса премилемелле тунă.

Хаклă парнепе хавхаланса, паллă машинист тата лайăхрах ĕçлеме пулчĕ.

Ф. СТЕПАНОВА.

Библиотекăра

ЕТĔРНЕ. Район центрĕнчи библиотекăна çӳрекенсен хисепĕ кунсерен ӳсет. Халĕ кĕнекесем улăштарма тата хаçат-журнал вулама библиотекăна куллен 150—200 çын пырать.

Библиотекăри кĕнекесен фончĕнче 24 пин том ытла. Кăçал библиотека валли çĕнĕрен икĕ пине яхăн кĕнеке туяннă.

Кĕнекесем илсе вулакансен шучĕ икĕ пин çынна çитнĕ.

Хулари предприятисенче тата районти колхозсенче куçса çӳрекен 12 библиотека ĕçлет.

И. ПЕТРОВ.

Силос хываççĕ

КӲКЕÇ. «Правда» колхоз уй-хирĕнче кăçал силослăх акнă курăксем вăйлă çитĕнчĕç. Иртнĕ кунсенче колхозниксемпе ферма работникĕсем МТС механизаторĕсем пулăшнипе 120 тонна силос хывса хăварчĕç. Çак ĕçре В. Александров, М. Петров, З. Бранькова, Р. Никонорова, Ю. Лазарева юлташсем уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕç.

Н. ВАСИЛЬЕВ.

Футбол вăййипе РСФСР-та мала тухассишĕн

Юлашки вăхăтра Ульяновскра, Ижевскра, Шупашкарта, Уфара, Павловăра, Горькире, Зеленодольскра, Йошкар-Олара футбол енĕпе РСФСР-та мала тухассишĕн ăмăрту пулса иртнĕ.

Халиччен иртнĕ вăйăсенче Ижевск, Уфа тата Горькинчи Сталински районти футбол командисем малта пыраççĕ. Çав командăсем пĕрре те выляса яман. Ульяновск хулинчи динамовецсем тăватă вăйă хыççăн пилĕк очко пухнă. Йошкар-Олари «Динамо» команди Шупашкарти Чапаевски поселок командинчен 2 : 1 шутпа выляса илнĕ, тăватă вăйă хыççăн тăватă очко пухнă. Халĕ çак команда ăмăртура пиллĕкмĕш вырăнта пырать. Тутар АССР-ĕнчи Зеленодольскри торпедовецсем тата Павлово хулинчи «Спартак» команди икĕ вăйă хыççăн икшер очко илнĕ. Юлашки вырăнта Шупашкар хулинчи Чапаевски поселок футболисчĕсем. Вĕсем пилĕк вăйă выляса пĕр очко кăна илнĕ. Çак командăн çитес вăхăтра—Зеленодольскри «Торпедо» командипе тата Павлово хулинчи «Спартак» командипе тĕл пулса выламалла.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

К И Н О

«РОДИНА»—августăн 28-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «У них есть Родина», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Ангел в отпуске».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00488 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20,000 экз.